ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул
Январь
19
ШĂМАТКУН
№ 14 (8666)
Хакĕ 20 пус.
34-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

Совет Союзĕ тăрăх (1 стр.).
Ленин кунĕсем умĕн (1 стр.).
В. И. Ленин произведенийĕсене пичетлесе кăларни (1 стр.).
Чăваш АССР Министрĕсен Советĕнче. 1951 çулхи IV-мĕш кварталти финанс планне тултарассишĕн пынă социализмлă ăмăрту итогĕсем çинчен (2 стр.).
СОВЕТ СТРОИТЕЛЬСТВИ. А. Измайлов.—Советсен организациллĕ-массăллă ĕçĕсем çинчен (2 стр.).
ПАРТИЛЛЕ ĔÇ ЫЙТĂВĔСЕМ. Н. Албутов.—Инструктаж парасси—партиллĕ ĕçĕн пысăк пайĕ (2 стр.).
ФЕРМАСЕНЧЕ ĔÇЛЕКЕНСЕНЕ ПУЛĂШМА. М. Осипов.—Улăма çемçетсе хатĕрлесси (2 стр.).
Хамăр республика тăрăх (3 стр.).
РЕСПУБЛИКĂРИ ШКУЛСЕНЧЕ. С. Селезнев.—Тăван чĕлхене вĕрентес ĕç çинчен (3 стр.).
Халăх демократи çĕршывĕсенче (3 стр.).
Корейăри ĕçсем (3 стр.).
Голланди салтакĕсем Корейăри вăрçăра çапăçасшăн мар (3 стр.).
ООН Генеральнăй Ассамблейин улттăмĕш сессийĕ (4 стр.).

Ĕçе лайăх пĕлекен механизаторсем вĕрентсе хатĕрлер

Социализмлă ялхуçалăхĕ çулсерен çĕнĕ çитĕнÿсем тăвать. Ял ĕçченĕсем промышленность валли чĕртавар, халăх валли апат-çимĕç ытлăн-çитлĕн парса тăрассишĕн кĕрешеççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсен пурнăçĕ лайăхланнăçемĕн лайăхланать.

Ялхуçалăхĕнчи çитĕнÿсене ÿстерсе пырассишĕн партипе правительство ырми-канми тăрăшаççĕ. Государство машина-трактор станцисемпе колхозсене хăватлă техникăпа хĕçпăшаллантарчĕç. Пĕлтĕр кăна ялхуçалăхне 137.000 трактор, 54.000 комбайн, çавăн пекех ытти машинăсемпе орудисем 2 миллион панă. Колхозсенче электростанцисем лартас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тăваççĕ. Çаксем пурте ялхуçалăхĕнчи тĕп ĕçсене тата ытларах механизацилеме, колхозниксен ĕçне çăмăллатма, тухăçлăрах ĕçлеме май параççĕ.

Хальхи вăхăтра уй-хир ĕçĕсене, пĕтĕмĕшпе илсен, машинăсемпе тăваççĕ. Колхозсенче 1951 çулта суха ĕçне пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех механизациленĕ, тырпула тăватă пайран виçĕ пайне трактор сеялкисемпе акнă, тĕштырăсене 60 процент ытла комбайнсемпе пухса кĕртнĕ.

Кăçал колхозсен уй-хирĕсенче машинăсемпе ĕçлесси тата та ытларах ÿсет. Çакна эпир партипе правительство пирĕн республика ялхуçалăхне малалла ÿстерсе пыма кирлĕ мерăсем йышăннинчен те уçăмлăн куратпăр. 1952 çулта республикăри машина-трактор станцисем 360 трактор, 300 самоходнăй комбайн, плугсемпе культиваторсем, сеялкăсемпе ытти машинăсем нумай илеççĕ.

Наука çитĕнĕвĕсемпе тата малта пыракансен опычĕпе усă курни, машинăсемпе ĕçлени ялхуçалăхĕнчи тĕп задачăна ăнăçлă татса пама лайăх майсем туса панчĕç. Халĕ ĕнтĕ тырпул тухăçлăхне тăтăшах ÿстерсе пырасси, общественнăй выльăх-чĕрлĕх йышне хăвăрт ÿстернипе пĕрлех, унăн тухăçлăхне хăпартассишĕн кĕрешесси колхозниксемпе механизаторсен хастарлă ĕçĕнчен килет.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ пирĕн республика ялхуçалăхĕ умне çакăн пек задача лартнă: çитес икĕ-виçĕ çул хушшинче кашни гектар пуçне 18 центнертан кая мар тĕштырă туса илме тытăнмалла; ытти культурăсен тухăçлăхне чылай ÿстермелле, общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттермелле.

Çав ответлă та хисеплĕ задачăна пурнăçлама партипе совет организацийĕсен тата ялхуçалăх органĕсен мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, МТС работникĕсене мобилизацилемелле. Парти организацийĕсен ялхуçалăхĕ умĕнче тăракан задачăсем çинчен колхозниксене тĕплĕ ăнлантарса памалла, колхозниксемпе механизаторсен социализмлă ăмăртăвне çĕнĕ пусăма çĕклемелле. Районти ертсе пыракан органсен колхозсемпе МТС-сен кулленхи ĕçне тĕрĕс йĕркелесе пымалла, ялхуçалăхне ертсе пырас енĕпе тата та тăрăшарах ĕçлемелле, тырпул тухăçлăхне, выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне ÿстерсе пыма пултаракан кадрсем çителĕклĕ вĕрентсе хатĕрлемелле.

Хальхи вăхăтра уйрăмах хăйсен ĕçне тĕплĕ пĕлекен механизаторсем çителĕклĕ таран вĕрентсе хатĕрлени кирлĕ. Ялхуçалăхĕнчи ăнăçлăх вĕсенчен нумай килет. Партипе правительство куллен тăрăшнине пула, республикăра трактористсемпе комбайнерсен, молотилка машинисчĕсемпе ытти специалистсен йышĕ, вĕсен ĕçри ăсталăхĕ ÿссех пыраççĕ.

Малта пыракан механизаторсем техника мĕн пама пултарнине пĕтĕмпех илессишĕн çине тăрса ĕçлеççĕ. Сăмахран, Первомайски МТС-ĕнчи трактористка Мефодьева юлташ хăйпе пĕрле ĕçлекен юлташĕпе иртнĕ çул «СТЗ» тракторпа 932 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тунă, горючи нумай перекетлесе хăварнă. Мефодьева юлташ трактора типтерлĕ сыхласа усрама, унпа тухăçлă ĕçлеме социализмлă обязательство илнĕ. Куславкка МТС-ĕнчи Моисеев, Артамонов трактористсем, Етĕрне районĕнчи Шеронов, Шмелев комбайнерсем ĕç тухăçлăхне ÿстерсе мухтава тухрĕç.

Вăрнар МТС-ĕнчи Социализмлă Ĕç Геройĕ Пронькин юлташ ертсе пыракан трактор бригади тивĕçлипех ĕнтĕ республикăра чи лайăххи шутланать. Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхоз çав трактор бригади тата колхозниксем хастарлă ĕçленипе тырпул тухăçлăхне çулсерен ÿстерсе пырать.

Ĕç тухăçлăхне ÿстерекен, ĕçе пахалăхлă тăвакан механизаторсем техникăна ăста пĕлеççĕ. Вĕсем хăйсен пĕлĕвне малалла ÿстерсе пыраççĕ. Вăл пурншĕн те çавăн пек пулмалла ĕнтĕ. МТС-ри мĕнпур механизаторсем техникăна пĕлсен кăна, унпа тухăçлă ĕçлесен кăна ялхуçалăхĕнчи ĕçсене ăнăçлă пурнăçлама пулать.

1951 çулхи ĕçсен итогĕсем çакна кăтартаççĕ: МТС-сен ĕçĕнче çаплах пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Республикăри вунçичĕ МТС тракторсемпе тумалли ĕçсен планне тултараймарĕç, Хĕрлĕ Чутай, Çĕмĕрле, Сĕнтĕрвăрри машина-трактор станцисем уйрăмах япăх ĕçлерĕç. Малта пыракан механизаторсем кашни условнăй трактор пуçне 900—1.000 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тăваççĕ. Çав вăхăтрах вăл хисеп, республикăна илес пулсан, 480 гектара çеç çитет. Нумай МТС-сенче комбайнсемпе çителĕксĕр усă кураççĕ. Пĕлтĕр вĕсемпе Тăвай, Первомайски, Шăхасан, Хĕрлĕ Чутай, Елчĕк, Комсомольски МТС-сенче питех те сахал ĕçленĕ.

Чылай МТС-сем кадрсем çителĕклĕ хатĕрлемеççĕ, вĕсен пĕлĕвне ялан ÿстерсе пымаççĕ. Çакă вара МТС-сен ĕçне лайăхлатма чăрмантаракан тĕп сăлтав пулса тăрать. Механизаторсем хушшинче коммунистсемпе комсомолецсем сахал.

Республикăра МТС-сем валли кадрсем хатĕрлеме пур майсем те çителĕклĕ. Канашра тата Етĕрнере механизаци шкулĕсем ĕçлеççĕ. Кăçал вăл шкулсенче тĕрлĕ специальноçпа 1.584 çын вĕрентсе кăларма пăхнă. МТС-сен тивĕçĕ механизаци шкулĕсене вĕренекенсем уйăрса памалли плансене пĕтĕмĕшпех пурнăçласси пулать. Май килнĕ таран трактористсене тата ытти механизаторсене харпăр хăй колхозĕнчи çынсенчен вĕрентсе хатĕрлеме тăрăшмалла. Механизаци шкулĕсен вĕренме пыракансене тĕрĕс воспитани, çирĕп пĕлÿ пама мĕн кирлине йăлтах тăвас пулать. Механизаторсем чăн-чăн ĕç ăстисем пулма пултарччăр. Вĕсене техника çинчен вĕрентнипех лăплансa лармалла мар, наука çитĕнĕвĕсемпе, малта пыракансен опычĕпе паллаштармалла.

Механизаци шкулĕсемсĕр пуçне МТС-сен хăйсен те кадрсем нумай хатĕрлемелле. Вĕсен курссенчен 1.200 çын вĕрентсе кăлармалла. Чылай МТС-сем ку ĕçе пурнăçлама тытăннă. Анчах Сиява, Канаш, Шăмăршă машина-трактор станцисем çак тарана çитсе те курссем организацилемен-ха.

Çуракине большевикла кĕтсе илмелле. Механизаторсен кадрĕсене хатĕрлесси ку ĕçре уйрăмах пысăк вырăн йышăнать. Кăçал кашни МТС-ăн икĕ сменăпа ĕçлеме кирлĕ чухлĕ трактористсем çителĕклĕ пулмалла.

Нумаях пулмасть Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозра виçĕ районти колхоз председателĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Унта Социализмлă Ĕç Геройĕ С. К. Коротков юлташ çапла каларĕ: «Эпир пĕр çул хушшинче тырпул тухăçлăхне пĕр хут çурă ÿстерме пултаратпăр-и? Пултаратпăр. Пĕр-ик çул хушшинче выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне икĕ хут ÿстерме тата колхозниксене тырă валеçсе парассине икĕ хут таран ÿстерме пултаратпăр-и? Пултаратпăр».

Çавна тума хăватлă техникăпа пĕлсе ĕçлени, çĕрĕç культурине лайăхлатни, машинăпа ĕçлессине хирĕçле шухăшсене вĕçне çитиех пĕтерни кирлĕ.

Механизаторсен чыслă та хисеплĕ тивĕçĕ—партипе правительство ялхуçалăхĕ умне лартнă задачăна пурнăçлама пулăшасси пулать.

Хĕрлĕ ялав илнĕ хыççăн

КАНАШ. Депо коллективĕ грузсене вырăна вăхăтра илсе çитерессишĕн, локомотивсене лайăх ĕçлеттерессишĕн, топливо перекетлессишĕн ăмăртса ĕçлет. 1951 çулхи декабрь уйăхĕнче депо плана пур показательсем тăрăх та ирттерсе тултарнă.

Хусан чугун çулĕн управленийĕпе дорпрофсож 1951 çулхи IV-мĕш кварталта тата декабрь уйăхĕнче паха тĕслĕхсем кăтартнăшăн Канаш депо коллективне хăйсен куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне памалла тунă.

Куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялав пани коллектив хастарлăхне çĕнĕрен ÿстерчĕ. Депори рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем 1952 çулхи задание пур показательсем тăрăх та чыслă пурнăçлама социализмлă обязательство йышăнчĕç. Çавăн хыççăн коллективра социализмлă ăмăрту тата анлăрах сарăлчĕ. Çак уйăхăн малтанхи вунăкунлăхĕнче депо задание чыслă пурнăçларĕ. Машинистсем нормăран ирттерсе чылай груз турттарчĕç, 160 тонна çĕр кăмрăкĕ перекетлерĕç.

Машинистсем хушшинчи ăмăртура уйрăмах СССР Верховнăй Совет депутачĕ, паллă машинист Назаров тата Николаевца Бакулин юлташсем паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Назаров юлташ иртнĕ вунăкунлăхра йывăр тиенĕ 6 поезд илсе çÿренĕ, 8.368 килограмм çĕр кăмрăкĕ перекетленĕ.

П. КУЛАГИН,
Канаш узелĕнчи партком секретарĕ.

Совет Союзĕ тăрăх

Çăмăл промышленноçăн çĕнĕ предприятийĕсем

КИЕВ, январĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Кăçал Украинăра çăмăл промышленноçăн çĕнĕ предприятийĕсене тăвас ĕç малалла пырать. Киевра çĕр мамăк çипĕ арлакан фабрика туса пĕтереççĕ. Çавăн пекех Тысменица хулинче (Станиславль облаçĕ) мамăклă тирсем туса хатĕрлекен пысăк фабрика тата Хуст хулинче (Закарпатски облаçть) çĕлĕксемпе картуссем çĕлекен фабрика лартаççĕ. Херсон облаçĕнче пиравăр комбиначĕ тăваççĕ.

Кантăр, кенаф, джут тата йĕтĕн тылласа тирпейлекен предприятисем лартас ĕçе анлă сарнă. Николаев, Чернигов, Сумы тата Днепропетровск облаçĕсенче кантăр тылласа тирпейлекен заводсем 7 туса пĕтереççĕ.

Пир-авăр тĕртекен, ăтă-пушмак, трикотаж, кĕпе-тумтир тата тир-сăран хатĕрлекен нумай предприятисене çĕнетсе пысăклатаççĕ. Роза Люксембург ячĕпе тăракан трикотаж фабрикине çĕнетсе çитереççĕ. Çак предприятире çĕнĕ машинăсем вырнаçтарса лартаççĕ, конвейерсем тăваççĕ. Черновицăри 4-мĕш чăлха фабрикинче чăлхасене сăрламалли çĕнĕ цех тума тытăннă.

Хушса тÿлемелли йĕркепе—5 тонна сĕт

СУМЫ, январĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Лебедински районти Ленин ячĕпе тăракан колхозра ĕне сăвакансене сĕт суса илмелли плана ирттерсе тултарнăшăн сĕт памалла тунă.

Социализмлă Ĕç Геройĕ Мария Савченко иртнĕ çулта çĕнĕ çитĕнÿ тунă. Вăл 8 ĕне пăхать, вăтам шутпа кашни ĕнерен 6.852 литр сĕт суса илнĕ. Ăна хушса тÿлемелли йĕркепе 5.047 литр сĕт параççĕ.

Лебедински районта хушса тÿлемелли йĕркепе ĕне сăвакансене 50 çынна сĕт памалла тунă. Ахтырски, Глински, Роменски тата ытти районсенче те Мария Савченко пек тăрăшса ĕçлекенсене хушса тÿлемелли йĕркепе выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем параççĕ.

Виçĕ специальноçе вĕреннĕ

СМОЛЕНСК, январĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Понизовски МТС-ра темиçе ĕçе пĕлекен трактористсен шучĕ çултан-çул ÿссе пырать. Çамрăк механизатор Анатолий Барсуков паха ĕç пуçарнă. Вăл иртнĕ çулта виçĕ машинăпа ĕçлеме вĕренсе çитнĕ. Барсуков çуркунне йĕтĕн акмалли çĕре сухаланă, йĕтĕн акнă, ун хыççăн сĕртме тунă. Йĕтĕн пулса çитсен, вăл йĕтĕн татмалли машинăпа ĕçлеме тытăннă. Сезонра 336 гектар йĕтĕн татса, нормăна 6,5 хут тултарнă.

Çулталăк вĕçленнĕ тĕле Анатолий Барсуков йĕтĕне тылласа тирпейлекен машинăпа ĕçлеме вĕренсе çитнĕ. Çапла ĕнтĕ вăл тракторист, йĕтĕн татакан тата йĕтĕн тылласа тирпейлекен машинăсен машинисчĕ.

Çак машинăсемпе ĕçлесе, А. Барсуков иртнĕ çулта сезонти нормăна 8 хут ирттерсе тултарнă, горючи 9 центнер тата машинăсене юсама каймалли укçана 2.500 тенкĕ перекетлесе хăварнă.

Понизовски МТС-ра 20 механизатор икшер ĕçе вĕренсе çитнĕ, вĕсем трактористсем тата йĕтĕн татмалли машина машинисчĕ е комбайнер пулса ĕçлеççĕ.

Н. В. Гоголе асăнса

Совет çыннисем вырăссен аслă писателĕ Николай Васильевич Гоголь вилнĕренпе 100 çул çитнине паллă тума хатĕрленеççĕ. Клубсенче, хĕрлĕ кĕтессенче, библиотекăсенче, вулав çурчĕсенче, институтсемпе шкулсенче аслă писателĕн пурнăçĕпе творчествине кăтартса паракан выставкăсем тунă.

Пĕр вăхăтра Н. В. Гоголь хальхи Ленинград облаçĕнчи Павловск хулинче пурăннă. Кунти библиотекăра пысăк выставка уçăлнă. «Н. В. Гоголь Павловскра» ятлă пайра писателĕн çав вăхăтри пурнăçĕпе ĕçĕсене кăтартса паракан çырусемпе документсем нумай.

Çĕршыври театрсем пурте Н. В. Гоголь вилнĕренпе 100 çул тултарнă куна паллă тума хатĕрленеççĕ. Политикăллă тата наукăллă пĕлÿсем саракан Пĕтĕм Союзри обществăн уйрăмĕсем хуласемпе ялсенче Н. В. Гоголь пурнăçĕпе творчестви çинчен лекцисем ирттереççĕ. (ТАСС).

В. И. Ленинпа И. В. Сталин ГОЭЛРО планне сÿтсе яваççĕ.
Д. А. НАЛБАНДЯН художник картини (ТАСС фотохроники).

Ленин кунĕсем умĕн

Аслă Ленина асăнса

Пирĕн çĕршыври ĕçсыннисем большевиксен партийĕпе Совет государствине туса хунă Владимир Ильич Ленина ядахах чĕрере тытса асăнса пурăнаççĕ. Вăл вилнĕренпе 28 çул çитес умĕн фабрикăсемпе заводсенче, колхозсемпе совхозсенче, институтсенче, музейсенче, клубсенче пин-пин докладчиксемпе агитаторсем аслă Ленин пурнăçĕ çинчен калаçусем ирттереççĕ.

В. И. Ленин Горький хулинче виçĕ хут пулнă. Кунти М. Горький ячĕпе тăракан литература музейне курма çынсем нумай пыраççĕ. Музейра В. И. Ленинпа Максим Горький туслă пулни çинчен калакан материалсем нумай.

Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи пароходствăн карапĕсем çинче Ленин çинчен докладсем, лекцисемпе калаçусем ирттереççĕ. «Ильич» ятлă теплоход çинче ĕçлекен çамрăк моряксем Ленин çамрăксене хушса хăварнине паллашмалли вечер ирттерме хатĕрленеççĕ.

Электросталь хулинчи (Мускав облаçĕ) К. Маркс ячĕпе тăракан культура çуртĕнче В. И. Ленина асăнса литература вечерĕ ирттернĕ. Вечерта РСФСР халăх артисчĕ М. Штраух тухса каланă, вăл кинокартина ÿкернĕ чухне аслă çулпуçăн сăнарне кăтартса парас тĕлĕшпе ĕçлени çинчен каласа панă.

Львов облаçĕнчи Бродовски, Нестеровски, Красненски тата ытти районсенчи ялсенче агитколлективсен членĕсем Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе Украинăн хĕвеланăç енчи облаçĕсем чечеклense ÿссе пыни çинчен колхозниксене каласа параççĕ.

Ижевск, Караганда, Ставрополь, Минеральные Воды хулисенче, çĕршыври ытти хуласемпе ялсенче те Ленин кунĕсене хатĕрленес ĕç анлă сарăлса пырать. (ТАСС).

Ленин вĕреннĕ университетра

ХУСАН, январĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Хусан университечĕ В. И. Ульянов-Ленин ячĕпе тăрать. Университетри студентсем 2 пин çын ытла хальхи вăхăтра хĕллехи экзаменсем параççĕ.

Университет çурчĕн иккĕмĕш хутĕнче 1887 çулта Владимир Ульянов лекцисем итленĕ аудитори пур. Халĕ кунта В. И. Ленин ячĕпе тăракан аудитори-музей. Аудитори-музейри экспонатсем В. И. Ленин Хусанта революциллĕ ĕç туса пынине кăтартса параççĕ.

Çамрăк чухне Владимир Ильич вĕреннĕ университет çуртне кашни çулах вуншар пин çын пырса курать. Аудитори-музейпа юнашар залра Владимир Ильич хутшăннипе студентсен пухăвĕ пулса иртнĕ.

Мускавран, Ленинградран тата ытти нумай хуласенчен университет çуртне пырса курнă совет çыннисем В. И. Ленинпа И. В. Сталина, Тăван çĕршыва чĕререн юратни çинчен çырса хăварнисем нумай.

В. И. Ленин ячĕпе тăракан шахтăра

КИЗЕЛ, январĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). «Кизелуголь» трестри В. И. Ленин ячĕпе тăракан шахта коллективĕ мĕнпур ĕçсыннисен аслă çулпуçĕ В. И. Ленин ĕç тухăçлăхне ÿстересси çинчен каланине пурнăçлас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлет.

Кульков, Старков тата Ушаков ертсе пыракан участоксен коллективĕсем кашни кулленех планран ирттерсе кăмрăк кăлараççĕ, Королев, Красногоров, Сафин, Лопатин тата ытти нумай шахтер-коммунистсем сменăри нормăна 1,5—2 хут ирттерсе тултараççĕ.

Шахтăри горняксем çĕнĕ çулта планран ирттерсе пĕр эшелон çĕр кăмрăкĕ ăсатнă.

Республикăри хуласемпе ялсенче

ВĂРНАР. Районти ĕçсыннисем большевиксен партийĕпе Совет государствин организаторĕ тата пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен аслă çулпуçĕ В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул çитнине паллă тума хатĕрленеççĕ. ВКП(б) райкомĕ предприятисемпе колхозсенче В. И. Ленин пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен докладсем тума докладчиксем уйăрнă. Вĕсем «28 çул Ленинсăр, Ленин çулĕпе—Сталин юлташ ертсе пынипе» темăпа докладсем туса параççĕ.

ВКП(б) райкомĕн парткабинечĕпе районти библиотекăра В. И. Ленинăн пурнăçĕпе вилĕмсĕр ĕçĕсене кăтартакан фотовитринăсемпе выставкăсем тунă.

Ялсенчи вулав çурчĕсемпе клубсенче те Ленин кунĕсене паллă тума хатĕрленеççĕ. Упнерти, Эльмĕн Сунарти вулав çурчĕсенче В. И. Ленин çырнă кĕнекесене пухса выставкăсем тунă. Агитаторсем колхозниксем хушшинче Ленинăн вилĕмсĕр ĕçĕсем çинчен калаçусем ирттереççĕ.

* * *

СОВЕТСКИ. Мăн Чураш вăтам шкулĕн коллективĕ Ленин кунĕсене хатĕрленет. Учительсем шкулта, Владимир Ильич Ленин вилнĕренпе 28 çул çитнине асăнса, докладсемпе калаçусем ирттереççĕ. Çак кунсенче «В. И. Ленин пурнăçĕпе ĕçĕсем», «Ленинпа Сталинăн аслă туслăхĕ», «28 çул Ленинсăр, Ленин çулĕпе—Сталин юлташ ертсе пынипе» темăсем тăрăх докладсем пулаççĕ.

* * *

ÇĔРПУ. Предприятисемпе учрежденисенче, шкулсенче тата колхозсенче Владимир Ильич Ленинăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен докладсемпе калаçусем ирттереççĕ.

Аслă Ленина асăнса шкулсенче пионерсен сборĕсене ирттереççĕ, ятарласа стена хаçачĕсем кăлараççĕ.

Районти библиотекăпа парткабинетра Ленин пурнăçĕпе ĕçĕсене кăтартса паракан плакатсемпе кĕнекесен выставкисене йĕркеленĕ.

В. И. Ленин произведенийĕсене пичетлесе кăларни

Пирĕн çĕршывра марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсем анлă сарăлнă. Пĕтĕм Союзри кĕнеке палати шута илнĕ тăрăх, Совет влаçĕ пулнăранпа К. Маркс, Ф. Энгельс, В. И. Ленин тата И. В. Сталин произведенийĕсене 889 миллион экземпляр пичетлесе кăларнă.

В. И. Ленин произведенийĕсен тиражĕ 222.360 пин экземпляра çитнĕ. Унăн гениллĕ произведенийĕсене 78 халăх чĕлхипе пичетлесе кăларнă. Октябрьти Социализмлă аслă революци пуличчĕнхи вăхăтра лезгинсен, татсен, кабардинсен, алыгеецсен, хаккассен, тувинсен, Совет Союзĕнче пурăнакан ытти хăш-пĕр халăхсен çырулăх та пулман. Халĕ ĕнтĕ В. И. Ленин произведенийĕсене çав халăхсен чĕлхипе те пичетлесе кăларнă.

В. И. Ленин Сочиненийĕсене вунпĕр халăх чĕлхипе—вырăссен, украинецсен, белоруссен, узбексен, казахсен, грузинсен, азербайджанецсен, литовецсен, латышсен, армянсен, эстонецсен чĕлхипе пичетлесе кăлараççĕ. Хальхи вăхăт тĕлне В. И. Ленин Сочиненийĕсене вырăсла, украинла, белорусла тата латышла пичетлесе кăларса пĕтернĕ.

В. И. Ленинăн уйрăм произведенийĕсене нумай хут пичетлесе кăларнă. Сăмахран, «Мĕн вăл «халăх тусĕсем» тата вĕсем социал-демократсене хирĕç мĕнле кĕрешеççĕ?» ятлă произведение 23 халăх чĕлхипе 71 хут, пĕтĕмпе 3.970 пин экземпляр пичетлесе кăларнă. «Российăра капитализм аталанни» ятлă произведени 2.534 пин экземпляр, «Мĕн тумалла?» ятлă произведени—4.705 пин экземпляр пичетленсе тухнă. «Империализм—капитализмăн чи çÿлти сыпăкĕ» ятлă произведение 41 халăх чĕлхипе 163 хут пичетлесе кăларнă. «Государство тата революци» ятлă кĕнекене 150 хут, пĕтĕмпе 5.280 пин экземпляр пичетлесе кăларнă. В. И. Ленинăн «Пĕр утăм малалла, икĕ утăм каялла», «Социал-демократин демократиллĕ революцири икĕ тактики», «Материализм тата эмпириокритицизм», «Пролетариллĕ революци тата ренегат Каутский», «Совет влаçĕн черетри задачисем», «Коммунизмри «сулахайлăхăн» ачалла чирĕ», «Продналог çинчен», «Сахалрах пулсан та лайăхрах пултăр», «Коопераци çинчен», «Аслă пуçару», «Вырăс социал-демократсен задачисем», «Çамрăксен союзĕн задачисем» ятлă произведенисене миллионшар тиражпа нумай хут пичетлесе кăларнă. (ТАСС).

Чӑваш АССР Министрӗсен Советӗнче

1951 ҫулхи IV-мӗш кварталти финанс планне тултарассишӗн пынӑ социализмлӑ ӑмӑрту итогӗсем ҫинчен

1951 ҫулхи IV-мӗш кварталти финанс планне срокчен тултарас тӗлӗшпе пынӑ социализмлӑ ӑмӑртура Чурачӑк районӗ (райсӑ Совет исполкомӗн председателӗ **Осипов** юлташ, районти финанс пайӗн заведующийӗ **Салеев** юлташ) малти вырӑна тухнӑ. Район финанс планне 103,8 процент тултарнӑ. Вӑл шутра: налог укҫи пухмалли плана 101,5 процент, государственнӑй страховани енӗпе плана 119,0 процент, перекет касси енӗпе—102,8 процент тултарнӑ. Государство тупӑшӗсен планне 17,1 процент ирттерсе тултарнӑ.

Чурачӑк районӗнчи финанс пайне Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне тата пӗрремӗш преми—5.000 тенкӗ памалла тунӑ.

Социализмлӑ ӑмӑртура Канаш хула Совет исполкомӗн финанс пайӗ (хула Совет исполкомӗн председателӗ **Капитонов** юлташ, хулари финанс пайӗн заведующийӗ **Петров** юлташ) иккӗмӗш вырӑн йышӑннӑ. Канаш хула Совет исполкомӗн финанс пайӗ IV-мӗш кварталти финанс планне 101,7 процент тултарнӑ. Вӑл шутра: налог укҫи пухмалли плана 101,1 процент, государственнӑй страховани енӗпе плана 109,7 процент, перекет касси енӗпе—101,5 процент тултарнӑ. Государство тупӑшӗсен планне 5,1 процент ирттерсе тултарнӑ.

Канаш хулинчи финанс пайне иккӗмӗш преми—4.000 тенкӗ памалла тунӑ.

Сӗнтӗр район Совет исполкомӗн финанс пайӗ (район Совет исполкомӗн председателӗ **Михеева** юлташ, районти финанс пайӗн заведующийӗ **Смирнов** юлташ) социализмлӑ ӑмӑртура виҫҫӗмӗш вырӑн йышӑннӑ. Район финанс планне 101,1 процент тултарнӑ. Вӑл шутра: налог укҫи пухмалли плана 101,8 процент, государственнӑй страховани енӗпе плана 110,4 процент тултарнӑ. Государство тупӑшӗсен планне 2,8 процент ирттерсе тултарнӑ.

Сӗнтӗр район Совет исполкомӗн финанс пайне виҫҫӗмӗш преми—2.000 тенкӗ памалла тунӑ.

Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗ IV-мӗш кварталти финанс планне тултарас тӗлӗшпе Улатӑр, Ишлей, Вӑрмар районӗсенчи финанс пайӗсем тата Шупашкарпа Улатӑр хулисенчи финанс пайӗсем лайӑх ӗҫленине палӑртнӑ.

IV-мӗш кварталти финанс планне тултарассишӗн Хӗрлӗ Чутай, Шӑмӑршӑ, Чкаловски, Куславкка, Первомайски районӗсенчи финанс пайӗсем ҫителӗксӗр ӗҫленӗ.

Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗ Хӗрлӗ Чутай, Шӑмӑршӑ, Чкаловски, Куславкка, Первомайски райсовет исполкомӗсен председателӗсене финанспа бюджет ӗҫне вӑйлатма, 1952 ҫулхи пӗрремӗш кварталти финанс планне тултарассишӗн куллен тӑрӑшса ӗҫлеме хушнӑ.

СОВЕТ СТРОИТЕЛЬСТВИ

Советсен организациллӗ-массӑллӑ ӗҫӗсем ҫинчен

Ӗҫсынни депутачӗсен вырӑнти Совечӗсем хуҫалӑхпа культура строительствинче пысӑк та ответлӑ ӗҫсем туса пыраҫҫӗ. Вӗсем ӗҫсыннисемпе тачӑ ҫыхӑнса, массӑсен пуҫарулӑхӗпе вӑй-хӑвачӗ ҫине таянса ӗҫлесе халӑх хуҫалӑхӗн планне ирттерсе тултарассишӗн тата ӗҫсыннисен культурине ӳстерессишӗн пысӑк ӗҫсем тӑваҫҫӗ.

Ӗҫсынни депутачӗсен Совечӗсен ӗҫӗсенче организациллӗ-массӑллӑ ӗҫсем пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ.

Организациллӗ-массӑллӑ ӗҫ мӗнле тӑнине Советсен сессийӗсене ирттернинчен, депутатсен ӗҫри активлӑхӗнчен курма пулать.

Сессисем ирттерес тӗлӗшпе ӗҫсынни депутачӗсен Улатӑр хула Совечӗ паха тӗслӗхсем кӑтартать, вӑл 12 хутчен хула Совечӗн сессийӗсене ирттернӗ. Куславкка районӗнчи ял Совечӗсем те сессисене вӑхӑтра ирттереҫҫӗ, хуҫалӑхпа строительство ыйтӑвӗсене тӑтӑшах сӳтсе яваҫҫӗ.

Ҫав вӑхӑтрах хӑшпӗр районсенче сессисене вӑхӑтра пухмаҫҫӗ, вӗсенче депутатсем пурте пулмаҫҫӗ, ыйтусене сӳтсе явас ӗҫре активлӑх ҫителӗксӗр. Сӑмахран, ӗҫсынни депутачӗсен Комсомольски район Совечӗн исполкомӗ 1951 ҫулта 6 хут сесси ирттерес вырӑнне 5 хут кӑна ирттернӗ.

Ҫакӑн пек тӗслӗхсем Октябрьски районӗнче те курма пулать. 9 уйӑх хушшинче районта пӗр ял Совечӗ кӑна сессисене вӑхӑтра, Чӑваш АССР Конституцийӗ хушнӑ пек ирттернӗ. Ҫак ҫитменлӗхсем ҫине район Совет исполкомӗ сӳрӗккӗн пӑхнӑ, ун пирки кирлӗ мерӑсем йышӑнман. Паллах ӗнтӗ, ҫав ӗҫе йӗркелемесӗр хуҫалӑхпа культура строительствинчи задачӑсене ӑнӑҫлӑ пурнӑҫлама чӑрмантарса пырать.

Сессисене вӑхӑтра ирттерни, сӳтсе явма лартнӑ ыйтусене малтанах пӑхса тухни, депутатсене ӗҫе активлӑ хутшӑнтарни, яланхи комиссисен ӗҫри ответлӑхне ӳстерни йышӑннӑ решенисене тимлӗ пурнӑҫлама май парать. Анчах та ҫакна чылай Советсем пурнӑҫламаҫҫӗ. Комсомольски районӗнчи Кивӗ Выҫли ял Совечӗнче ку тӗлӗшпе ӗҫсем питӗ начар. Кунта депутатсен ролӗпе активлӑхне хӑпартассишӗн тӑрӑшмаҫҫӗ.

Советсен ӗҫӗсенче депутатсем хӑйсен суйлавҫисем умӗнче отчетсем туса пани пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Пӗрмай ирттерекен тӗлпулусем массӑсемпе тачӑ сыхӑнса тӑма тата вӗсен ыйтӑвӗсене куллен тивӗҫтерме май параҫҫӗ. Ку тӗлӗшпе Пӑрачкав район Совечӗн депутачӗсем паха тӗслӗхсем кӑтартаҫҫӗ. Район Совечӗн 32 депутатӗнчен 26 депутат хӑйсен суйлавҫисем умӗнче отчетсем туса панӑ.

Вырӑнти Советсен ӗҫӗсенче чылай ҫитменлӗхсем пур-ха. Хӑшпӗр депутатсем ӗҫсыннисемпе сыхӑну тытмаҫҫӗ, Чӑваш АССР Конституцийӗн 110-мӗш статьине пурнӑҫлассишӗн ҫителӗклӗ тӑрӑшмаҫҫӗ.

Хӗрлӗ Чутай, Йӗпреҫ, Советски, Шупашкар районӗсенче депутатсемпе суйлавҫӑсен тӗлпулӑвӗсене организацилесси япӑх пырать. Исполкомсем ку ӗҫпе сахал интересленеҫҫӗ, депутатсене суйлавҫӑсем умӗнче отчетсем тума пулӑшмаҫҫӗ.

Организациллӗ-массӑллӑ ӗҫе лайӑх йӗркеленинчен яланхи комиссисем хӑйсен задачисене ӑнӑҫлӑ пурнӑҫласси килет. Ӗҫсынни депутачӗсен вырӑнти Советсен пӗрремӗш сессийӗнче республика тӑрӑх 2.005 яланхи комисси тунӑ. Вӗсенче 6.578 депутат тата 1.600 активист. Ҫакӑ вӑл пысӑк вӑй. Яланхи комиссисен пӗлтерӗшне кирлӗ вырӑна хурсан, вӗсене пӗрмай пулӑшсан тата большевикла ертсе пырсан, паллах ӗнтӗ, комиссисем Советсене пысӑк пулӑшу пама пултараҫҫӗ. Комиссисен пуҫарулӑхне хакламалла, вӗсен сӗнӗвӗсене сессисенче е ларусенче сӳтсе явмалла. Яланхи комиссисем Советсен решенийӗсене уйрӑм предприятисем мӗнле пурнӑҫланине тӗрӗсленӗ хыҫҫӑн, тӗрӗслев итогӗсем тӑрӑх Советсен кирлӗ мерӑсем йышӑнмалла. Республикӑри районсенче лайӑх ӗҫлекен яланхи комиссисем чылай. Улатӑр хула Совечӗн, Елчӗк районӗнчи Аслӑ Пӑла Тимеш ял Совечӗн, Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Шуркасси ял Совечӗн яланхи комиссийӗсем ӗҫре паха тӗслӗхсем кӑтартаҫҫӗ. Анчах та яланхи комиссисем хӑйсен ӗҫӗсене пур ҫӗрте те ҫителӗклӗ туса пымаҫҫӗ-ха. Чылай район Совечӗсенче бюджетпа финанс комиссийӗсем кӑна ӗҫе хутшӑннӑ. Ытти комиссисем ӗҫлеме тытӑнман. Уйрӑм ял Совечӗсенче ялхуҫалӑх комиссийӗсем ҫеҫ ӗҫлеҫҫӗ.

Организациллӗ-массӑллӑ ӗҫе вӑйлатни умра тӑракан задачӑсене план тӑрӑх тума май парать. Лайӑх йӗркеленӗ ӗҫ планӗ хуҫалӑхпа культура строительствинчи задачӑсене ӑнӑҫлӑ татса пама пулӑшать. Сӑмахран, ӗҫсынни депутачӗсен Ишлей райсовет исполкомӗн 1951 ҫулхи иккӗмӗш квартал ӗҫ планне хатӗрлеме исполком пайӗсен заведующийӗсене, уйрӑм депутатсене тата яланхи комиссисене хутшӑнтарнӑ. Вӗсем плана йышӑннӑ чухне чылай лайӑх сӗнӳсем панӑ. Ҫавӑн пекех ӗҫсынни депутачӗсен Шупашкар хула Совет исполкомӗ 1951 ҫулхи тӑваттӑмӗш квартал планне хатӗрличчен хулари уйрӑм предприятисен ӗҫӗсем мӗнле пынине тӗрӗслеме депутатсене уйӑрнӑ. Тӗрӗслӳ материалӗсем тӑрӑх исполком коопераци тата вырӑнти промышленность предприятийӗсем хӗле мӗнле хатӗрленнине сӳтсе явнӑ. Кунсӑр пуҫне, санитари правилисене пурнӑҫланине тата ӗҫре техникӑпа усӑ курнӑ чухне сусӑрланасран сыхласине хулари промкомбинат цехӗсенче мӗнле йӗркеленине пӑхса тухрӗ. Исполком ларӑвӗсенче ҫакӑн пек ыйтусене депутатсем пулӑшнипе сӳтсе явнине ырламалла, мӗншӗн тесен ку вӑл ӗҫ планне хатӗрлес тата ӑна пурнӑҫа кӗртес ӗҫе депутатсене активлӑ хутшӑнтарма май парать.

Организациллӗ-массӑллӑ ӗҫӗн тӗрлӗрен формисемпе усӑ курни большевиксен партин политикине пурнӑҫа кӗртме, пирӗн ҫӗршыв умӗнче тӑракан плансене ӑнӑҫлӑ тултарма, ӗҫсыннисен культурӑпа йӑла ыйтӑвӗсене тивӗҫтерме пысӑк пулӑшу парать.

Организациллӗ-массӑллӑ ӗҫе вӑйлатса хуҫалӑхпа культура строительствинче кӑҫалхи ҫул татах та пысӑк ҫитӗнӳсем тӑвасси—республикӑри Совет органӗсен тивӗҫӗ.

А. ИЗМАЙЛОВ.

Вӑйлӑ тырпулшӑн

ВӐРНАР. Ленин ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем хӑйсен ҫак кунсенче пулса иртнӗ пӗрлехи пухӑвӗнче кӑҫал кашни гектартан 100 пӑтран кая мар тӗштырӑ, 900 пӑт ҫӗрулми, 90 пӑт махорка, пӗр ҫулхи плантацирен 118 пӑт кок-сагыз тымарӗ, 8 пӑт нумай ҫул ӳсекен курӑк вӑрри, 1.800 пӑт тымарҫимӗҫ, 1.500 пӑт силос хывмалли курӑксем, 45 пӑт хӑмла туса илме обязательство илчӗҫ.

Колхоз кӑҫалхипе виҫҫӗмӗш ҫул хӑмла туса илет. Пӗлтӗр хӑмла пахчи пӗр гектар пулнӑ. Унтан 25 пин тенкӗ тупӑш курнӑ. Кӑҫал вара колхозниксем хӑмла пахчине тата тепӗр гектар ӳстереҫҫӗ.

Колхозниксемпе колхозницӑсем выльӑх-чӗрлӗх йышӗпе унӑн тухӑҫлӑхне ӳстерес тӗлӗшпе те обязательство илчӗҫ. Кашни ӗнерен 1.400-шер литр сӗт суса, кашни сурӑхран 3,5 килограмм ҫӑм, кашни чӑхран 90-шар ҫӑмарта илме сӑмах пачӗҫ. Кӑҫал ӗне вити, чӑх-чӗп вити тӑваҫҫӗ, кивӗисене пӗтӗмӗшпех юсаҫҫӗ.

Колхозниксем, обязательствӑна пурнӑҫлас тесе, мӗн кирлине пурне те тума тӑрӑшаҫҫӗ. Уйрӑмах ҫуракине хатӗрленес ӗҫе чылай вӑйлатрӗҫ. Ҫуракинче акма кирлӗ вӑрлӑха пӗтӗмӗшпех тасатса хатӗрленӗ.

Ҫуракине большевикла кӗтсе илес тесе, бригадӑсем пӗр-пӗринпе ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ. Ӑмӑртура 1-мӗш бригада (бригадирӗ А. Скворцов юлташ) тата 3-мӗш бригада (бригадирӗ Л. Семенов юлташ) малта пыраҫҫӗ. Вӗсем ҫуракине февралӗн 15-мӗшӗ тӗлне пӗтӗмӗшпех хатӗрленсе ҫитме тӑрӑшаҫҫӗ.

С. ФЕДОТОВ.

ЧӐВАШ АССР-ӗнчи МТС-сем КӖРКУННЕПЕ ХӖЛЛЕХИ ВӐХӐТРА ТРАКТОРСЕМ ЮСАМАЛЛИ ПЛАНА 1952 ҪУЛХИ ЯНВАРӖН 15-МӖШӖ ТӖЛНЕ ТУЛТАРНИНЕ КӐТАРТАКАН

СВОДКА

(процентпа)

МТС-сем	Плана тултарнӑ
1. Шӑмӑршӑ	61,7
2. Советски	56,5
3. Улатӑр	52,8
4. Пӑрачкав	47,0
5. Элӗк	44,1
6. Чкаловски	43,6
7. Октябрьски	41,4
8. Комсомольски	36,5
9. Чурачӑк	35,8
10. Шупашкар	35,0
11. Муркаш	34,2
12. Ишлей	34,2
13. Шӑхасан	34,0
14. Сурмайдан	33,3
15. Елчӗк	32,5
16. Кувакино	32,5
17. Катнинино	32,5
18. Вӑрмар	31,5
19. Ҫӗмӗрле	30,3
20. Йӗпреҫ	29,7
21. Красноармейски	29,7
22. Хӗрлӗ Чутай	29,5
23. Сиява	29,0
24. Куславкка	27,5
25. Первомайски	27,2
26. Етӗрне	27,0
27. Вӑрнар	25,0
28. Сӗнтӗр	25,0
29. Канаш	21,7
20. Тӑвай	21,4
31. Ҫӗрпӳ	21,4
32. Сӗнтӗрвӑрри	18,5

Фермӑсенче ӗҫлекенсене пулӑшма

Улӑма ҫемҫетсе хатӗрлесси

1950 ҫулта Сӗнтӗр районӗнчи «Гвардия» колхоз выльӑх апачӗ ҫителӗклӗ хатӗрлеймен. Сӑмахран, утӑ-улӑм планне пахнӑ шая вӑтӑр процента яхӑн ҫитмен. Ҫакӑн пек йывӑрлӑх пулнӑ пулсан та, колхоз выльӑх-чӗрлӗхе ӑнӑҫлӑ хӗл каҫарнӑ. Мӗн тунӑ-ха колхоз ку тӗлӗшпе?

Чи малтан выльӑх апатне тӗрӗс расходлассине йӗркеленӗ, ӑна шута илсе тухнӑ, фуражир аллине панӑ, хӗл вӑхӑтӗнче вара колхозниксен пӗрлехи пухӑвӗнче ҫирӗплетнӗ план тӑрӑх расходланӑ. Ферма заведующийӗсем мӗнле апата мӗн чухлӗ илнине ҫийӗнчех приходланӑ, расходланине кашни кун шута илсе пынӑ, ун ҫинчен уйӑхра пӗрре артель правленине ведомость тӑратнӑ. Выльӑх-чӗрлӗх пӑхнӑ ҫӗрте ӗҫлекен колхозниксем кашни килограмм апата тирпейлӗ тыткаланӑ, выльӑхсене яланах кормушка е сырӑш ҫине хурса ҫитернӗ. Асӑннӑ ӗҫсем чылай апата, уйрӑмах утӑ-улӑма перекетлеме май панӑ.

Апата выльӑх-чӗрлӗхе парас умӗн лайӑх хатӗрлесси—питӗ кирлӗ те паха ӗҫ. Ҫакӑн ҫинчен колхозра виҫӗмҫул хӗл лариччен сӑмах хускатнӑ. Ӗҫ ҫапла пулнӑ. Колхоз правленийӗн ларӑвӗнче выльӑх апачӗ расходламалли плана сӳтсе явнӑ. Ларӑва ӗҫне ферма работникӗсемпе конюхсем те активлӑ хутшӑннӑ. Унта районти ялхуҫалӑх пайӗнче ӗҫлекен зоотехник М. Потапова юлташ та пулнӑ, вӑл улӑма хатӗрлесе парасси ҫинчен каласа кӑтартнӑ. Правлени ларӑвӗ чылай ӗҫсем туса ирттерме йышӑннӑ.

Нумай та вӑхӑт иртмен, колхозниксем правлени решенине пурнӑҫа кӗртнӗ. Платниксен бригади ӗне ферминче кухня туса лартнӑ. Унта шыв ӑшӑтма пысӑк хуран тата икӗ чан вырнаҫтарнӑ, улӑма ҫемҫетсе хатӗрлеме шӑтӑк (траншея) тунӑ. Тепӗр икӗ-виҫӗ кунтан ҫавнашкал шӑтӑк лаша вити сывӑхӗнче те хатӗр пулнӑ. Ҫак ӗҫсене тунӑ чухне зоотехник колхоза пысӑк пулӑшу панӑ.

Ӗне ферминче ӗҫлекенсемпе конюхсем хӗл ларсанах ҫӗнӗ ӗҫе тытӑннӑ: улӑма выльӑхсене парас умӗн ҫемҫетсе хатӗрленӗ. Шӑтӑкра хӑйне хӑй хӗрнӗ улӑм малтанхи хутах лайӑх пахалӑхлӑ тухнӑ, ҫемҫе те ӑшӑ, хӑмӑртарах тӗслӗ, ырӑ шӑршӑллӑ пулнӑ вӑл. Выльӑхсем ӑна юратса ҫиччӗр тесе, улӑм ҫине сӑнӑх е сӑсӑл тата тӑвар сапса панӑ. Ҫасах выльӑх-чӗрлӗх ҫав апата хӑнӑхнӑ.

Ҫапла ӗнтӗ, колхозра хӗлӗпех выльӑх апатне перекетлӗ тыткаланӑ, унпа тӗрӗс усӑ курнӑ. Ҫемҫетсе хатӗрленӗ арпа-улӑм ӗнесемпе лашасем умӗнчен пӗр кун та татӑлман. Ҫак ӗҫре ферма работникӗсене колхоз правленийӗ куллен пулӑшса тӑнӑ. Кирлӗ чухлӗ сынсем, лашасем уйӑрса панӑ. Машина-трактор станцийӗ те колхоза пулӑшу панӑ, вӑл хӑйӗн соломорезкипе 78 тонна улӑма тураса вӗтетнӗ.

Выльӑх апачӗпе тирпейлӗ те тӗрӗс усӑ курни колхоза пысӑк усӑ кӳнӗ: утӑ-улӑм ҫитнӗ, выльӑхсене кӗтӗве сывӑ та тӗрӗс-тӗкел тата вӑтам-мӑнтӑр кӑларнӑ.

Хӗллехи вӑхӑтра выльӑхсене лайӑхрах апат ҫине куҫарнипе тата вӗсене зоотехника вӗрентнӗ пек тӑрантарса усранипе иртнӗ ҫулта колхоз выльӑх-чӗрлӗх тухӑҫлӑхне те чылай ӳстернӗ. Пӗлтӗр вӗсем ӗнесен сӗт тухӑҫлӑхне ӳстерес тӗлӗшпе пысӑк ҫитӗнӳ тунӑ: кашни ӗнерен, виҫӗмҫулхипе танлаштарсан, икӗ хут ытларах сӗт суса илнӗ. Ку вӑл планпа пӑхнинчен сахалтарах, ҫапах та ӳсӗм пысӑк.

— Ӗнесене кӗтӳре ҫӳретнӗ вӑхӑтра та лайӑхрах пӑхма тытӑнсан, ӗшӗл апат ҫулса памалла тусан, паллах, килес ҫулах кашни ӗнерен 2.000-шер литртан кая мар сӗт суса илме пулать,—тет ӗне ферми заведующийӗ П. Артюшкин юлташ,—Ҫакӑншӑн кӗрешетпӗр те ӗнтӗ эпир.

«Гвардия» колхоз—тӑватӑ ялхуҫалӑх артелӗ пӗрлешсе пысӑкланнӑ колхоз. Вӑл ӳсӗм ҫулӗ ҫинче, тырпул тухӑҫлӑхне ӳстернипе пӗрлех, обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе пур майсемпе те вӑйлатса пырать. Ахальтен мар колхоз кӗтӗвӗсем ҫултан-ҫул ӳсеҫҫӗ.

Колхозниксемпе колхозницӑсем тунӑ ӳсӗмсемпе ҫырлахмаҫҫӗ. Вӗсем кӑҫал фермӑсене малалла аталантарассишӗн, выльӑх-чӗрлӗх тухӑҫлӑхне татӑкланах ӳстерессишӗн кӗрешӗве тухрӗҫ, ҫӗнӗ обязательствӑсем илчӗҫ. Ҫак тӗллевпе ӗҫлесе, халӗ выльӑх-чӗрлӗхе ӑнӑҫлӑ хӗл каҫарассишӗн тимлӗн тӑрӑшаҫҫӗ.

...Ӗне выльӑхсем кормушкӑри ҫемҫе те ырӑ шӑршӑллӑ апата ыратса ҫиеҫҫӗ. Вӑл апата тутлӑрах туса парас тесе ӗне сӑвакансем тата пушмак пӑрусене пӑхакансем вӑй-хала шеллемесӗр ӗҫленӗ, ӑна ферма ҫумӗнчи кухньӑра хатӗрленӗ.

Фермӑра ӗнесене тутӑ тытакан апатсемпе тӑрантараҫҫӗ, яланах ӑшӑтнӑ шывпа шӑвараҫҫӗ. Рациона ҫак апатсем кӗреҫҫӗ: тураса ҫемҫетнӗ арпа-улӑм, ҫӗрулми, кӑшман, силос, ҫӑнӑх. Тӑрӑшса ӗҫленин результачӗ куҫ умӗнчех: ӗнесем уйӑхран уйӑха сӗт хушса пыраҫҫӗ.

Ӗне ферминче арпа-улӑма выльӑхсене парас умӗн ҫемҫетсе хатӗрлессине кӑҫалхи хӗлле тата та лайӑхрах йӗркеленӗ.

Улӑма хӑйне хӑй хӗрсе ҫемҫелмелле тӑвасси—йывӑр ӗҫ мар. Ӑна «Гвардия» колхозра ҫапла хатӗрлеҫҫӗ. Шӑтӑка тӑватӑ пая уйӑрнӑ (кашни пӳлӗме выльӑхсене пӗр талӑк хушши ҫитермелӗх улӑм кӗрет). Унӑн тӗпне тата стенисене хӑмаран тунӑ. Тураса вӗтетнӗ улӑма пӳлӗмсене сийӗн-сийӗн хывса пынӑ май, ӑшӑ шывпа сапса йӗпетеҫҫӗ, тӑвар сапаҫҫӗ, пусӑрӑнтараҫҫӗ. Тулса ҫитнӗ пӳлӗме хӑмаран тунӑ щитпа витеҫҫӗ, ун ҫине йывӑр япала хураҫҫӗ, унтан, ӑшӑ пултӑр тесе, улӑм купалаҫҫӗ. Виҫӗ кун иртсен, ҫав улӑма ӑшӑллӑ выльӑхсене параҫҫӗ. Тепӗр кунне иккӗмӗш пӳлӗмри улӑма выльӑхсене ҫитереҫҫӗ, малтанхи шӑтӑка улӑм тултараҫҫӗ.

«Гвардия» колхозӑн улӑма выльӑхсене ҫемҫетсе парас ӗҫри опытне ытти колхозсене те анлӑ сарни кирлӗ. Ку тӗлӗшпе районти зоотехниксемпе ветеринари работникӗсем начар ӗҫлеҫҫӗ тесе калама май ҫук. Вӗсем «Гвардия» колхоза ферма заведующийӗсемпе колхоз председателӗсем экскурсие пырса курассине организациленӗ. Иртнӗ ҫулхи октябрь уйӑхӗнче пулса иртнӗ районти ялхуҫалӑх выставкинче шӑтӑк чавса, улӑма хӑйне хӑй хӗрмелле туса кӑтартнӑ, ҫемҫетнӗ апата ҫавӑнтах ӗнесене ҫитернӗ.

Ҫав ӗҫсем усӑллӑ пулнӑ. «Гвардия» колхоз тӗслӗхӗпе районти «Красный богатырь», «Хлебороб», «Колос», Сталин ячӗпе тӑракан, «Аврора» тата ытти хӑшпӗр колхозсенче улӑма ӳлте асӑннӑ меслетпе ҫемҫетсе ҫитерме тытӑннӑ. Анчах хӑшпӗр колхозсенче ҫеҫ. Ҫак ӗҫе кашни колхозрах организацилемелле. Выльӑх-чӗрлӗх специалисчӗсен пуҫланӑ ӗҫе туса ҫитермелле. Вӗсем пурте М. Потапова зоотехник пек чӑн-чӑн организаторсем пулма тивӗҫ.

М. ОСИПОВ.

ПАРТИЛЛӖ ӖҪ ЫЙТӐВӖСЕМ

Инструктаж парасси—партиллӗ ӗҫӗн пысӑк пайӗ

Парторганизаци секретарӗсене, парти комитечӗн аппаратӗнче ӗҫлекенсене инструктаж пани ертсе пырас ӗҫре пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Инструктаж парас тени вӑл парторганизаци секретарӗсене, парти аппаратӗнче ӗҫлекенсене партин ертсе пыракан органӗсем йышӑннӑ решенисен политикӑллӑ пӗлтерӗшне тӗплӗ ӑнланса илме пулӑшас тата ҫав решенисене пурнӑҫлас ӗҫе кирлӗ пек йӗркелеме вӗрентес тенине пӗлтерет. Пирӗн практика ҫакна кӑтартса парать: партипе правительство кӑтартӑвӗсене пурнӑҫлас ӗҫе мӗнле йӗркелемеллине тӗпӗ-йӗрӗпе кӑтартса панӑ чухне тата парти решенийӗсен политикӑллӑ пӗлтерӗшне лайӑх ӑнланса илнӗ чухне парторганизаци секретарӗсем коммунистсен пултарулӑхӗпе пуҫарулӑхне пӗрмай вӑйлатса пыраҫҫӗ, вӗсен политикӑллӑ тата производствӑллӑ активлӑхне ӳстереҫҫӗ.

Парти енчен ертсе пырассине ҫӳлӗ пуҫӑма ҫӗклес тесен,—вӗрентет пире Сталин юлташ,—пуриччен малтан парти работникӗсен квалификацине ӳстермелле.

Пуҫламӑш парторганизаци секретарӗсене инструктаж парас ӗҫӗн пӗлтерӗшӗ халӗ тата та ытларах пысӑкланать. Партин Центральнӑй Комитечӗпе Совет правительстви пирӗн республика умне пысӑк задачӑсем кӑларса тӑратрӗҫ. ВКП(б) Чӑваш обкомӗн VIII-мӗш пленумӗ республика промышленноҫӗпе ялхуҫалӑхне тата культура строительствине малалла аталантарас тӗлӗшпе калама ҫук пысӑк ӗҫсем туса ирттерме палӑртрӗ. Пленум решенийӗсем пуҫламӑш парторганизацисен пӗтӗм ӗҫӗнче тӗп вырӑн йышӑнса тӑмалла. Ертсе пыракан кадрсен квалификацине ӳстересси ҫинчен тата обком решенийӗсене пурнӑҫлас ӗҫе большевикла организацилеме кадрсене вӗрентесси ҫинчен парти

Н. АЛБУТОВ,
ВКП(б) Канаш райкомӗн секретарӗ

комитечӗсен пӗр самантлӑха та манма юрамасть.

ВКП(б) Канаш райкомӗ пуҫламӑш парторганизаци секретарӗсене инструктаж парас ӗҫе лайӑхлатса пырать. Район умӗнче тӑракан кирек хӑш пысӑк ӗҫе те, ӑна пурнӑҫлама тытӑниччен малтан парторганизаци секретарӗсемпе пӗрле сӳтсе яватпӑр, вӗсене ӗҫе мӗнрен тытӑнмаллине тата мӗнле организацилемеллине, партире тӑракан тата партире тӑман актива, ӗҫсыннисен массине ӗҫе мӗнле майпа хутшӑнтармаллине кӑтартса паратпӑр.

Иртнӗ ҫулта парти райкомӗ пуҫламӑш парторганизаци секретарӗсемпе 15 семинар тата 3 канашлу ирттерчӗ. Вӗсенче ялан тенӗ пекех район умӗнче тӑракан задачӑсене пурнӑҫлас ӗҫе организацилесси ҫинчен тӗплӗн сӳтсе явнӑ. Ҫамрӑк секретарьсемпе уйрӑмах тимлӗ ӗҫлеме тивет. Вӗсем парти строительствин чылай ыйтӑвӗсене ҫителӗклӗ пӗлмеҫҫӗ-ха. Ҫавӑнпа та ҫамрӑк секретарьсемпе уйрӑм семинарсем ирттеретпӗр. «Парторганизаци ӗҫне планласси», «Парти пухӑвне хатӗрлесе ирттересси», «Коммунистсене партпорученисем парас ӗҫе йӗркелесси» т. ыт. ыйтусем тӑрӑх секретарьсене вӗрентни вӗсен квалификацине ӳстерме пулӑшрӗ.

Семинарсенче, канашлусенче тата парти комитетӗнче е райком бюровӗнче ӗҫе мӗнле йӗркелемелли ҫинчен кӑтартусем, сӗнӳсемпе канашсем пани, паллах, пысӑк пӗлтерӗшлӗ ӗҫ. Анчах колхозра е предприятире, учрежденире е шкулта пулса, парторганизаци секретарӗсене вырӑнта пулӑшни тата та усӑллӑрах. Райкомра ӗҫлекенсем, вӑл шутра райком секретарӗсем те, пуҫламӑш парторганизацисенче час-часах пулаҫҫӗ, унта пӗр кун мар, икшер кун, тепӗр чухне тата та ытларах пурӑнаҫҫӗ. Вырӑнта пулнӑ чухне райком работникӗсем пуҫламӑш парторганизаци ӗҫне пур енчен те тишкерсе тухаҫҫӗ, ӗҫе лайӑхлатма, ӗҫ планӗ тума, коммунистсене производствӑри ответлӑ участоксене вырнаҫтарса тухма агитациллӗ-массӑллӑ ӗҫе йӗркелеме пулӑшаҫҫӗ.

Пӗлтӗр, ноябрь уйӑхӗнче, райком инструкторӗ П. Муравьев юлташ Чкалов ячӗпе тӑракан колхоза кайрӗ. Вырӑнти лару-тӑрупа паллашнӑ хыҫҫӑн, унӑн унта виҫӗ кун пурӑнмалла пулчӗ. Вӑл, парторганизаци секретарӗпе пӗрле, парти пухӑвне хатӗрлесе ирттернӗ, секретаре план тума тата коммунистсене, вӗсен пултарулӑхне кура, партпорученисем тупса пама пулӑшнӑ. Парторганизацин ӗҫӗпе тӗплӗ паллашнӑ хыҫҫӑн, Муравьев юлташ ҫакна асӑрханӑ: парторганизаци колхоз активӗпе тачӑ ҫыхӑну тытмасть, ӑна воспитани пама тата парти ретне ӳстерессишӗн кирлӗ пек тӑрӑшмасть. Ҫак ыйтӑва тӗпӗ-йӗрӗпе тӗпчесе тухсан, Муравьев юлташ ӑна ВКП(б) райкомӗн бюровӗнче пӑхса тухма кирлине палӑртрӗ. Бюро ҫамрӑк коммунистсене воспитани парас тата колхоз производствинче малта пыракансене парти ретне илес тӗлӗшпе мӗнле ӗҫлени ҫинчен парторганизаци секретарӗн докладне итлерӗ.

Калас пулать, райком инструкторӗ пулӑшнипе Чкалов ячӗпе тӑракан колхозра парторганизацин ӗҫӗ чылай лайӑхланчӗ. Парторганизаци райком бюровӗ кӑтартса панисене пурнӑҫласа, партире тӑман активпа ӗҫлессине вӑйлатрӗ, ҫамрӑк коммунистсене обществӑллӑ-политикӑллӑ ӗҫе ытларах хутшӑнтарма пуҫларӗ.

Паллах, парторганизаци секретарӗсене партиллӗ-политикӑллӑ тата партиллӗ-организациллӗ ӗҫсене йӗркелеме вӗрентес тени вӑл, пӗтӗм ӗҫе хамӑр алӑпа—парти комитетӗнчи работниксен вӑйӗпе тумалла тенине пӗлтермест. Ун пек тӑвас пулсан, секретарьсен пуҫарулӑхӗ чакма пултарать. Ӗҫе мӗнле тумаллине кӑтартса пани секретарьсен пултарулӑхӗпе пуҫарулӑхне вӑйлатма пулӑшмалла.

Парти комитечӗн аппаратӗнчи работниксене инструктаж парас ӗҫ ҫине те тимлӗ пӑхни кирлӗ. Пурне те паллӑ, райкомра ӗҫлекенсенчен пӗрисен опыт пысӑкрах пулсан, теприсен—сахалтарах. Ҫавӑнпа та эпир вырӑна тухса каякан кашни работника уйрӑммӑн инструктаж паратпӑр. Унсӑрӑн пысӑк ҫитменлӗхсем пулма пултараҫҫӗ. Кунта ҫак тӗслӗхсене кӑтартса пама пулать. ВКП(б) райкомӗн ялхуҫалӑх пайӗн инструкторне П. Краснов юлташа Коминтерн ячӗпе тӑракан колхозри парторганизаци парти пухӑвӗсен тата районти партконференци решенийӗсене мӗнле пурнӑҫланине тӗрӗслесе тухма хушнӑччӗ. Вырӑнта пулсан, вӑл, парторганизацин пӗтӗм ӗҫӗпе паллашас вырӑнне, ҫиелтен кӑна шӑйӑрттарса тухнӑ. Унсӑр пуҫне, парторганизаци секретарьне райком бюровӗнче отчет тума хатӗрленме те пулӑшман. Ыйтӑва тӗпӗ-йӗрӗпе тӗпчесе вӗренмен пирки, ун ҫинчен бюрора сӳтсе явма май килмерӗ.

Калинин ячӗпе тӑракан колхозра та райком работникӗсем час-часах пулнӑ. Анчах унти пуҫламӑш парторганизаци ӗҫӗнче пурпӗрех паллӑ улшӑнусем пулни палӑрман. Мӗншӗн ҫавӑн пек? Райкомӑн пайӗсенчи работниксем, вырӑнта пулсан, хӑйсен пайне тивекен ыйтусемпе кӑна интересленеҫҫӗ, сведенисем пухаҫҫӗ. Ҫапла вара парторганизацин пӗтӗм ӗҫне тӗплӗ паллашмаҫҫӗ. Ҫакӑ вӑл вырӑна тухса каякан работниксене тӗрӗс инструктаж паманнинчен тата райком пайӗсем пӗр-пӗринпе тачӑ ҫыхӑнса ӗҫлеменнинчен килет. Ку ҫитменлӗхе эпир пӗтерсе пыратпӑр. Райком работникӗ парторганизацие каять пулсан, вӑл райком секретарӗпе е пайсен заведующийӗсемпе калаҫать, хӑйне кирлӗ кӑтартусене илет. Ун пек чухне ӑна хӑйне те ӗҫлеме ҫӑмӑлтарах.

Парторганизаци секретарӗсен доклачӗсемпе отчечӗсене райком бюровӗнче итлени пысӑк пӗлтерӗшлӗ ӗҫ. Секретарьсен доклачӗсене бюрора итленӗ чухне пуҫламӑш парторганизаци ӗҫне пур енчен те тӗплӗ тишкерсе тухатпӑр, паха опыта пӗтӗҫтерме тӑрӑшатпӑр, ҫитменлӗхсене пӗтермелли майсене кӑтартса паратпӑр. Бюрора парторганизаци секретарӗ те ыйтусене парти хушнӑ пек татса пама вӗренет, ертсе пырас ӗҫӗн нумай ыйтӑвӗсене тарӑнрах ӑнланса илет.

Иртнӗ ҫулта райком бюровӗ 11 пуҫламӑш парторганизаци отчечӗсене сӳтсе яврӗ. Бюрора итличчен парторганизацисен ӗҫне райком работникӗсем—инструкторсем, пайсен заведующийӗсем, райком секретарӗсем—пур енчен те тӗплӗ тишкерсе тухнӑ. Ҫапла туни, парторганизацисен ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене тарӑнрах курма, ҫав ҫитменлӗхсен сӑлтавӗсене тӗпӗ-йӗрӗпе пӗлме пулӑшать. Пӗр тӗслӗх илсе кӑтартӑпӑр. Ҫиелтен пӑхсан, машина-трактор станцийӗнчи пуҫламӑш парторганизаци пӗтӗм ӗҫе ӑнӑҫлӑ туса пырать пек. Анчах унӑн ӗҫӗпе тарӑнрах паллашсан, ҫакна куртӑмӑр: парторганизаци секретарӗ П. Матвеев юлташ пысӑк йӑнӑшсем тӑвать.

Парторганизацин пӗр пухӑвӗнче пӗрремӗш бригада кӗрхи ҫӗртме сухи тумалли плана тултарманни ҫинчен сӳтсе явнӑ. Анчах, МТС-ри ун чухнехи лару-тӑрӑва кура, пӗр бригада ҫинчен мар, пӗтӗм станци ӗҫӗ ҫинчен ыйту лартмалла пулнӑ. Мӗншӗн тесен, кӗрхи ҫӗртме тумалли плана пӗр бригада кӑна мар, ыттисем те тултарман. Ҫак пухура МТС дирекцийӗн ӗҫне сӳтсе явмалла пулнӑ.

Парторганизацин тепӗр пухӑвӗнче 7-мӗшпе 9-мӗш бригадӑсем уй-хир ӗҫӗсене начар туни ҫинчен сӳтсе явнӑ. Анчах ҫав бригадӑсен ӗҫне малтан никам та тӗрӗслемен. Пухура бригадирсен докладне итленӗ те, ҫавӑнпа ҫырлахнӑ. Ахальтен мар ӗнтӗ пухура коммунистсем тухса каласман.

Ҫавӑн пек пухусем усӑ кӳрес ҫук. Парторганизаци секретарӗ ыйтӑва конкретлӑ лартатпӑр тесе ятне ҫеҫ тӑвать. Парти пухӑвӗнче умра тӑракан тӗп ыйтӑва, урӑхла каласан, хуҫалӑхри пӗтӗм ӗҫе вӑйлатма пултаракан ыйтӑва сӳтсе явмалла тата ҫав ыйтӑва малтан секретарӗн хӑйӗн кӑна мар, организацири мӗнпур коммунистсен вӑйӗпе хатӗрлесе пӑхса тухмалла. Матвеев юлташ пӗр пӗччен, активсӑр ӗҫленипе ӗнтӗ партиллӗ-политикӑллӑ ӗҫе хуҫалӑх ӗҫӗпе тачӑ ҫыхӑнтарса туса пымасть. Ҫавӑн пирки тех МТС тракторсене юсас ӗҫре чӑтма ҫук юлса пырать. МТС-ра ӗҫ дисциплини ҫирӗп мар, рабочисен ӗҫне кирлӗ пек йӗркелемен. Тракторсене юсасси тӗп ыйту пулса тӑрать. МТС ҫитес ҫуракинче ӑнӑҫлӑ ӗҫлесси тракторсене халех лайӑх юсаса хатӗрленинчен килет. Апла пулсан та ҫак ыйтӑва парти пухӑвӗнче сӳтсе явман. Парторганизаци тӗп ыйтуран пӑрӑнса кайнӑ. Вӑл тракторсене юсакан рабочисем хушшинче политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе, социализмлӑ ӑмӑртӑва организацилесе ертсе пымасть.

Ҫак тӗслӗхрен акӑ мӗнле вывод тумалла: райком работникӗсем парторганизаци секретарӗсене инструктаж парас ӗҫе пур чухне те тӗплӗ тумаҫҫӗ-ха. Парторганизацин шалти ӗҫне мӗнле йӗркелемеллине кӑтартса панӑ чухне, партиллӗ-политикӑллӑ ӗҫсене хуҫалӑхри ӗҫсемпе тачӑ ҫыхӑнтарса туса пыма вӗрентмеҫҫӗ.

Райкомӑн кулленхи ӗҫне тишкерсе тухни пире ҫакна кӑтартса пачӗ: ӗҫе мӗнле тунине куллен тӗрӗслемесен, мӗн пек лайӑх инструктаж та пулӑшу кӳмест. Ҫавна кура эпир хамӑр йышӑннӑ решенисене тата партин ертсе пыракан органӗсен кӑтартӑвӗсене мӗнле пурнӑҫланине куллен тӗрӗслесе тӑрас ӗҫ ҫине нимрен ытларах тимлӗ пӑхма пуҫларӑмӑр.

Парторганизаци секретарӗсене инструктаж парасси, йышӑннӑ решенисене пурнӑҫланине куллен тӗрӗслесе тӑрасси—партиллӗ ӗҫӗн пысӑк пайӗ пулса тӑрать. Организациллӗ ӗҫ мӗн чухлӗ вӑйлӑрах, хуҫалӑхпа культура строительствинчи задачӑсене пурнӑҫлас ӗҫре парторганизацисен кӗрешӳри пултарулӑхӗ те ҫавӑн чухлӗ вӑйлӑрах пулать.

Хамăр республика тăрăх

Малта пыракансен опытне сараççĕ

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводра малта пыракансен опытне пропагандăлас ĕçе пысăка хурса хаклаççĕ. Стахановла шкулсем организациленĕ, техникăллă ыйтусем тăрăх лекцисем ирттереççĕ, рабочисен пĕрлехи пухăвĕсенче, курссенче стахановецсем хăйсен ĕç меслечĕпе тата опычĕпе паллаштараççĕ. Нумай тиражпа тухакан «Сталинец» хаçатра консультацисем, новаторсен статьисене час-часах пичетлеççĕ, чи паллă стахановецсен опычĕ çинчен кĕнекесем çырса кăлараççĕ. Малта пыракансен опытне пропагандăлас тата пурнăçа кĕртес ĕçе цехсенчи парторганизацисем пуçарса ертсе пыраççĕ. Рабочисем, инженерсемпе техниксем ĕçре паха тĕслĕх кăтартсан е производствăна çĕнетсе лайăхлатмалли çĕнĕ ларсан, агитаторсем çавăн çинчен рабочисемпе работницăсене çийĕнчех ăнлантарса параççĕ.

Парткомпа дирекци рабочисене, инженерсемпе техниксене çĕршыври малта пыракан предприятисемпе рабочисен паха опычĕпе паллашма пур енчен те пулăшаççĕ. Завод тĕрлĕ хаçатсемпе журналсем нумай çырăнса илет, кĕнекесем туянать. Дирекци уйрăм работниксене ытти хуласенчи предприятисене кайса курма та май парать.

Токарьсем метала хăвăрт касмалли меслетпе интересленнĕ. Завод дирекцийĕ чи лайăх токарьсенчен пĕрине—Романов юлташа Сталинла премин лауреачĕсен Угольковпа Марков юлташсен опычĕпе паллашма Мускаври «Красный пролетарий» завода командировкăна янă. Романов юлташ новаторсен меслечĕпе тĕплĕ паллашнă. Унтан таврăнсан вăл заводри токарьсене курни-илтни çинчен тĕплĕ каласа панă, çĕнĕлле ĕçлеме вĕрентнĕ.

Иккĕмĕш изоляционнăй цехра Чапурипăпа Никитина намотчицăсем стахановла ĕç меслечĕ çинчен юлташĕсене час-часах каласа параççĕ, ĕçе çĕнĕлле йĕркелеме пулăшаççĕ. Ытти цехсенче Приймак монтажница, Мищенко слесарь, Зилотин сварщик, Цветкова прессовщица тата ытти юлташсем те малта пыракансен опытне пропагандăлас тĕлĕшпе активлă ĕçлеççĕ.

1951 çулта заводра техникăллă ыйтусем тăрăх пурĕ çĕр лекци ытла ирттернĕ. Главнăй конструктор Воронель, инженерсем—Кобленц, Евстропов, Шимкевич юлташсем вулакан лекцисене рабочисем, инженерсемпе техниксем пысăк интереспа итлеççĕ. Польский юлташ Сталинла премин лауреачĕ Ковалев инженер меслечĕ çинчен лекцисем час-часах ирттерет. Пĕтĕм коллектив пĕлсе тăтăр тесе, библиотекăна мĕнле кĕнекесем килни çинчен кашни уйăхра типографире ятарласа пĕлтерӳ пичетлесе кăлараççĕ. Библиотека коллективĕ новаторсен—стахановецсемпе рационализаторсен тата изобретательсен культурăллă ыйтăвĕсене лайăх тивĕçтерессишĕн ăмăртса ĕçлет.

Завод коллективĕн творчествăллă пуçарулăхĕпе пултарулăхĕ пĕрмай ӳсет. Вăл государство заданийĕсене ăнăçлă тултарса пырать. Уйрăм стахановецсем çĕршыври ытти предприятисен коллективĕсемшĕн те паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Иртнĕ кĕркунне П. Королев фрезеровщик-инструментальщик хăйĕн опычĕпе СССР Электропромышленность министерствине пăхăнса тăракан предприятисенче ĕçлекен фрезеровщик-инструментальщиксене паллаштарма Мускава кайса килчĕ.

М. БРИКЕР.



Совет çĕршывĕнче ачасем савăнăçлă ӳсеççĕ.
УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Шупашкарти 16-мĕш номерлĕ ача садĕнче.
Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Çирĕп туслăх

ÇĔМĔРЛЕ. Хутарти И. Н. Ульянов ячĕпе тăракан вăтам шкулта вĕренекенсем икĕ çул ĕнтĕ Чехословакири Оломоуц хулинчи пионерсемпе сыхăну тытаççĕ. Вĕсем пĕр-пĕрин патне çырусем ярса, вĕренӳри ӳсĕмсем çинчен пĕлтереççĕ, хăйсен савăнăçлă пурнăçĕпе паллаштараççĕ.

И. Н. Ульянов ячĕпе тăракан вăтам шкулти учительсенчен пĕри — географи преподавателĕ В. Г. Толстов юлташ Аслă Отечественнăй вăрçăра Чехословакири Оломоуц хулине ирĕке кăларнă çĕрте çапăçнă.

Нумаях пулмасть, Чехословакири туссенчен çыру илсен, вăл ачасемпе калаçу ирттерчĕ, Оломоуц хулине ирĕке кăларни çинчен каласа пачĕ.

«Совет çĕршывĕнчи пирĕн хаклă туссем!—тесе çырнă Чехословаки ачисем.—Пирĕн патăмăрта халĕ «Чехословакипе Совет Союзĕн туслăх уйăхлăхĕ» пырать. Докладсем, концертсем пулаççĕ, кинофильмсем кăтартаççĕ. Пирĕн хулара халĕ Ажаев романĕ тăрăх ӳкернĕ «Далеко от Москвы» ятлă фильм кăтартаççĕ. Тĕлĕнмелле лайăх фильм вăл!

Пирĕн пата совет артисчĕсем, спортсменĕсем, музыкантсем, колхозниксем, стахановецсем, ученăйсем килчĕç. Пурте вĕсем пирĕн пата «туслăх уйăхлăхне» ирттерме килнĕ. Пурне те эпир хамăр тăвансем пек кĕтсе илетпĕр. Кунтан нимĕн те тĕлĕнмелли çук, мĕншĕн тесен эпир, чехсем, яланах вырăссене кăмăллакан халăх пулнă. Россия яланах пирĕн юратнă çĕршыв пулнă.

Пирĕн пĕтĕм халăх çак уйăхра Совет Союзне, унăн халăхĕсене юратнине тата тепĕр хут кăтартса парать, халăхсем хушшинчи туслăха татах çирĕплетет, эпир те, тăвансем, сире чунтан-чĕререн юратнине пĕлтеретпĕр...

Сирĕн çырăва пирĕн вырăнти «Новая политика» хаçатра тата Прагăра тухса тăракан «Отчизна и свет» журналта пичетлесе кăларчĕç. Эпир хамăр шкулта вырăс кĕнекисен тата ССР Союзĕнчен килнĕ çырусен выставкине уçрăмăр. Выставка ачасемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕсене кăна мар, хулари пĕтĕм ĕçсыннисене интереслентерчĕ...».

Ответлă çырăва шкулти географи кружокĕн членĕсем çырчĕç. Вĕсем шкул вырнаçнă ялти Ленин ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ çулта хăйĕн уй-хирĕнчен вăйлă тырпул пухса кĕртни çинчен пĕлтерчĕç, географи кружокĕн ĕçĕпе тата географи кружокĕ кăларакан «Родная природа» ятлă бюллетенĕн пĕр номерĕн содержанийĕпе паллаштарчĕç, кружок членĕсем çуллахи каникул вăхăтĕнче Чăваш республикинчи пĕр юханшыв тăрăх—Сăр шывĕ тăрăх пысăк похода тухма хатĕрленни çинчен пĕлтерчĕç.

Е. АФАНАСЬЕВ.

Ткачихăсен ăмăртăвĕ

ÇĔРПӲ. Пир-авăр фабрики коллективĕ çулталăкри плана срокчен тултарма, планран ирттерсе вунтăр пин метр пир-авăр тĕртсе кăларма, материал перекетлеме, продукцин хăйне ларакан хакне чакарма сăмах пачĕ. Ку уйăхра фабрика производство планне кунтан-кун ирттерсе тултарать.

Пĕлтĕр фабрикăра ĕçлекен рабочисенчен çурри ытла ĕç нормине тултарса пырайман пулсан, халĕ сменăри задание пурте тенĕ пекех ирттерсе тултараççĕ. I-мĕшпе II-мĕш сменăсенче ĕçлекен ткачихăсенчен 80 проценчĕ ĕç нормине 120 процентран пуçласа 150 процента çити тултараççĕ.

Г. Минова ткачиха, район Совет депутачĕ А. Иванова, М. Мишуткина ткачихăсем сменăри заданисене пĕрре çурă хут ытла тултарса пыраççĕ.

А. Наумовăпа Т. Степанова ученицăсем халиччен икшер станокпа кăна ĕçленĕ. Çĕнĕ çултан пуçласа вĕсем виçшер станокпа тĕртме тытăннă.

А. АЛЕКСАНДРОВ.
(Хамăр корр.).

Электростанцие ĕçе ячĕç

ТАВАЙ. Çак кунсенче Чапаев ячĕпе тăракан, «Сталь», «Горьковская Коммуна» колхозсем Кĕтне шывĕ çинче тунă электростанцие ĕçе ячĕç.

Электростанцие ĕçе янă ятпа пысăк митинг пулчĕ. Митингра ВКП(б) райкомĕн секретарĕ И. Иванов юлташ саламлă сăмах каларĕ.

Электростанци Чапаев ячĕпе тăракан, «Сталь», «Горьковская Коммуна» колхозсенчи обществăллă çуртсене, колхозниксен çурчĕсене тата выльăх-чĕрлĕх фермисене çутă парать. Кăçал колхозри ĕçсене механизацилеме тытăнаççĕ.

Çĕнĕ кĕнекесем

Чăваш АССР государство издательстви çакăн пек кĕнекесем пичетлесе кăларнă:

чăвашла:

А. Кăлган. Хаклă парне (калав). Кĕнеке хуплашкипе шалти картинкисене М. Михаэлис художник тунă.

Кĕнекере 24 стр., тиражĕ 5.000 экз., хакĕ 50 пус.

Стихван Шавлы. Сăвăсемпе поэмăсем. Кĕнекере 144 стр., тиражĕ 3.000 экз., Хакĕ 4 т. 60 пус.

вырăсла:

Программа по русскому языку для I—IV классов чувашских начальных, семилетних и средних школ.

Кĕнекере 32 стр., тиражĕ 4.000 экз., хакĕ—60 пус.

Программы по русскому языку и литературному чтению для V—VII классов чувашских семилетних и средних школ.

Кĕнекере 60 стр., тиражĕ 2.000 экз., хакĕ—1 т. 20 пус.

Программа по русскому языку и литературе для VIII—X классов чувашских средних школ.

Кĕнекере 76 стр., тиражĕ 1.000 экз., хакĕ 1 т. 50 пус.

Депутатсен отчечĕсем

ВĂРМАР. Çак кунсенче Тикешри «Большевик» колхозри суйлавçăсем хăйсен депутачĕсемпе тĕл пулчĕç. Депутатсем хăйсене панă наказсене мĕнле пурнăçлани çинчен отчетсем туса пачĕç.

Колхоз председателĕ депутат И. Филимонов юлташ колхоз хуçалăхĕнчи çитĕнӳсем çинчен каласа пачĕ.

Иртнĕ çулта «Большевик» колхоз пысăк çитĕнӳсем турĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем тăрăшса ĕçленипе ялхуçалăх артелĕ кашни гектартан 96—120 пăт тĕштырă туса илнĕ. Колхоз обществăллă продуктивлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана та ăнăçлă тултарчĕ. Государство умĕнчи обязательствăсене чыслă пурнăçларĕ. Пулă кӳлли тунă, сад пахчине чылай пысăклатнă. Халĕ колхоз çитес çураки валли лайăх кĕтсе илме хатĕрленет, кăçал татах та вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешет.

Ял Совет председателĕ депутат П. Бородков юлташ суйлавçăсен наказĕсене пурнăçласа ял Советĕнче библиотека уçни çинчен, трахомăпа кĕрешес ĕçре пысăк çитĕнӳсем туни çинчен каласа пачĕ. Ял сăн-сăпачĕ те чылай илемленчĕ. Урамсене нумай йывăçсем лартнă.

Депутат З. Кабакова юлташ ĕне фермине ĕçлет. Вăл хăй пăхакан кашни ĕнерен 1.500-шер литр ытла сĕт суса илнĕ, кашни ĕнерен пĕрер пăру илсе пăхса ӳстернĕ.

Депутатсем хыççăн суйлавçăсем тухса каларĕç. Вĕсем хăйсен сăмахĕнче хăшпĕр депутатсем çителĕксĕр ĕçленине палăртрĕç. Суйлавçăсем депутатсене колхозра нумай отраслĕллĕ, пысăк тупăш паракан хуçалăх тăвассишĕн, ĕçсыннисен ыйтăвĕсене куллен тивĕçтерсе пырассишĕн лайăх ĕçлеме сĕнчĕç.

Г. МАТВЕЕВ.

Халăх демократи çĕршывĕсенче

Корея халăхĕ В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул çитнине паллă тăвать

ПХЕНЬЯН, январĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Çурçĕр Пхеанан провинцийĕн центрне — Синьыйчжу хулине Америка интервенчĕсем иртнĕ çулта пĕтĕмпех çунтарса янă тата аркатса тăкнă пулнă. Халĕ хулана юсама тытăннă. Хулари Ким Ир Сен ячĕпе тăракан площадьре В. И. Ленинăн пысăк портречĕ курăнса тăрать, ăна сиен мĕс йывăç турачĕсемпе илемлетнĕ. Портрет патне кашни кунах шкул ачисем, хĕрарăмсем, рабочисем, Корея Халăх çарĕн воинĕсем, Китай халăх добровольцĕсем, аслă Ленина пĕтĕм халăх хисеплеине палăртса, хыр турачĕсем илсе пыраççĕ.

Синьыйчжу хулинче тата Демократиллĕ Корея Халăх республикинчи ытти хуласенче те Корейăн ССР Союзĕпе культурăллă çыхăнусем тытас тĕлĕшпе ĕçлекен обществин уйрăмĕсем В. И. Ленин çинчен, В. И. Ленинпа И. В. Сталинăн аслă туслăхĕ çинчен лекцисемпе калаçусем ирттереççĕ. Январĕн 15-мĕшĕнче Пхеньян хулинче тата пур провинцисемпе уездсен центрĕсенче те В. И. Ленинăн пурнăçĕпе тата революциллĕ ĕçĕпе паллаштаракан выставкăсем уçăлнă.

Пани Çурçĕр Корейăри пур районсенче те В. И. Ленин çинчен ӳкернĕ кинофильмсене кăтартма пуçлаççĕ. Январĕн 20-мĕшĕпе 22-мĕшĕ хушшинче Пхеньянра тата республикăри ытти хуласенче, ялсенче тата предприятисенче В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул тултарнине асăнса пухусем ирттереççĕ.

В. И. Ленин произведенийĕсене пичетлесе кăларас ĕç Румынире

БУХАРЕСТ, январĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Румынири ĕçсыннисем Владимир Ильич Ленинăн произведенийĕсене вĕренме тăрăшаççĕ.

Совет Çарĕ Румынине фашистла пусмăртан ирĕке кăларнă хыççăн Румынири рабочи партин издательстви В. И. Ленин произведенийĕсене нумай пичетлесе кăларнă. В. И. Ленин произведенийĕсем пĕтĕмпе 2 миллион та 225 пин экземпляр, çав шутра румын чĕлхипе 2.085 пин экземпляр пичетленсе тухнă.

В. И. Ленинăн суйласа илнĕ произведенийĕсен икĕ томне темиçе хутчен те пысăк тиражпа пичетлесе кăларнă.

1951 çулта В. И. Ленин Сочиненийĕсен 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш тата 20-мĕш томĕсене кашнине 100 пин экземпляр пичетленĕ. Халĕ В. И. Ленин Сочиненийĕсен 21-мĕш томне пичетлеççĕ.

Кăçал В. И. Ленин Сочиненийĕсене малалла та кăларма, «Коммунизмри «сулахайлăхăн» ачалла чирĕ», «Мĕн тумалла?» тата ытти кĕнекесене çĕнĕрен пичетлесе кăларма палăртнă.

Болгарире Ленин кунĕсене хатĕрленеççĕ

СОФИЯ, январĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Владимир Ильич Ленин вилнĕренпе 28 çул çитнине палăртса, Болгарипе Совет Союзĕ обществи Софийăра, унти «Москва» ятлă чи лайăх кинотеатрта Ленина асăнмалли вечерсем ирттерет. Çав вечерсенче Ленин произведенийĕсене тата этемлĕхĕн питĕ чаплă генийĕ çинчен çырнă сăвăсене, очерксене тата калавсене вулаççĕ, Ленин çинчен ӳкернĕ кинофильмсене кăтартаççĕ.

Ленин кунĕсене ирттерме Димитрово хулинчи ĕçсыннисем активлă хатĕрленеççĕ.

Шахтăсенче, фабрикăсенче тата заводсенче «Ленин ялавĕ айĕнче, Сталин ертсе пынипе, мирпе социализмшăн кĕрешер!» темăпа докладсем ирттерме тытăннă.

Хулари кĕнеке магазинĕсем тата библиотекăсем Ленин çырнă кĕнекесен выставкисене тунă. Шахтерсен клубĕсенче «Великое зарево», «Человек с ружьем» ятлă фильмсем тата ытти кинокартинăсене кăтартаççĕ.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, январĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле пур фронтсенче те тăшмана хирĕç оборонăра тăрса çапăçаççĕ, тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене тата техникине чылай пĕтереççĕ.

Январĕн 16-мĕшĕнче хĕвеланăçĕнчипе вăтаçĕрти фронтсен уйрăм участокĕсенче тăшман, нумай танксемпе артиллери пулăшнипе, Халăх çарĕн позицийĕсем çине хытă тапăнса атакăсем тунă. Тăшман атакисене сире-сире янă, ăна пысăк сиен кӳнĕ.

Хĕвелтухăçĕнчи фронтра уйрăмах паллă улшăну пулман. Çав фронтăн уйрăм участокĕсенче тупăсемпе пĕр-пĕрне хирĕç пенĕ.

Январĕн 16-мĕшĕнче Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç çапăçакан салтакĕсем тăшманăн 8 самолетне персе ӳкернĕ, çав самолетсем унччен, ытти самолетсемпе пĕрле, Вонсанри, Муньчхоньри, Нампхори тата Аньакри мирлĕ халăх çине бомбăсем пăрахнă пулнă.

Голланди салтакĕсем Корейăри вăрçăра çапăçасшăн мар

ГААГА, январĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Голландин Корейăри батальонĕн салтакĕсем Корея халăхне хирĕç агрессиллĕ вăрçă пынă пирки хăйсем тарăхнине ытларах та ытларах палăртаççĕ. Салтаксем хăйсен тăванĕсем патне янă çырусенче Америка империалисчĕсен интересĕсемшĕн вăрçăра çапăçма килĕшменни çинчен пĕлтереççĕ. Голланди салтакĕсем хушшинче фронтран таракансем нумайланнă.

«Де Ваархейд» хаçат Америкăн фронтри çар сучĕ Пусан хулинче Голландин 3 салтакне позицисенчен пăрахса кайнăшăн, Корея Халăх çарне хирĕç çапăçма килĕшменшĕн айăпланă, тесе çырать.

Америка сучĕ голландецсене пысăк наказани памалла тунă. Ван Керкховен салтака—16 çуллăха, Кивит салтака — 15 çуллăха, Холткамп салтака—5 çуллăха тĕрмене хупма приговор йышăннă. США-н Корейăри çарĕн командованийĕ çавăн пек хĕсĕрленипе Голланди салтакĕсене Корейăри вăрçа чарса лартасси çинчен калаçма пăрахтарасшăн.

Америка авиацийĕ сĕмсĕрленсех Китайăн Çурçĕр-Хĕвелтухăçĕнчи пайне тапăнать

ПЕКИН, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Мукденран çакăн çинчен пĕлтерет:

Январĕн 13-мĕшĕнче 12 сехет те 27 минутра Америкăн 16 самолечĕ Китай территорийĕ çине вĕçсе кĕнĕ, Мукден хули патĕнчен вĕçсе иртнĕ.

Çав самолетсемех Ляодун провинцийĕнчи Бэньси, Фушунь, Цинъюань тата Синьпин хулисем çинче вĕçсе çӳренĕ.

Унччен маларах Америка самолечĕсен 4 ушкăнĕ, вĕсенчен пĕринче 4 самолет пулнă, 12 сехет те 07 минутра, кун хыççăн Америка самолечĕсен виçĕ ушкăнĕ, кашни ушкăнра 16 истребитель пулнă, 12 сехет те 16 минутра Ляодун провинцийĕнчи Хуаньчжэнь, Цзинань, Тунхуа тата Куаньдянь хулисем çинчен вĕçсе иртнĕ.

США правительстви Иран правительствине хĕсет

Америка Ирана çар ĕçĕ енĕпе „пулăшу пама" пăрахнă

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Пĕрлешӳллĕ Штатсем Ирана çар ĕçĕ енĕпе «пулăшу пама» пăрахнă. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче Иран правительстви «Хăрушсăрлăха пĕрле хӳтĕлемелли законри» условисене пурнăçласа пымасть тесе шутлаççĕ.

США Ирана ала пусма сĕннĕ килĕшĕве Иран срокра—январĕн 8-мĕшĕ тĕлне—алă пусман, ун хыççăн та çав килĕшӳ çине алă пусма шутлани палăрмасть, тенĕ ответлă ĕçри çынсем.

Çавна май хăрушсăрлăха пĕрле хӳтĕлес ĕçĕн управленийĕ текепскерĕн руководителĕ Гарриман Ирана çар материалĕсем яма чарнă.

Республикăри шкулсенче

Тăван чĕлхене вĕрентес ĕç çинчен

Сталин юлташăн «Марксизм тата чĕлхе вĕрентĕвĕн ыйтăвĕсем» ятлă произведенийĕ тата ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ литературăпа искусство çинчен йышăннă историллĕ постановленисем пичетленсе тухни пирĕн шкулсенче чĕлхепе литературăна вĕрентес ĕçе çĕнĕлле йĕркелеме лайăх майсем туса пачĕç. Çак паллă документсене тĕп никĕсе хурса ĕçлени тăван чăваш чĕлхипе литературине вĕрентес ĕçре пысăк çитĕнӳсем тума пулăшать.

Тăван чĕлхене вĕрентес тĕлĕшпе тăракан задачăсене пурнăçа кĕртме хальхи вĕренӳ планĕнче çирĕплетнĕ сехетсем çителĕклĕ. Панă сехетсемпе пĕлсе, туллин усă курни кăна кирлĕ. Чăваш чĕлхине вĕрентекенĕн пĕр тĕллев—вĕренекенсене тăван чĕлхепе тата литературăпа çирĕп пĕлӳсем парасси, лайăх вулама, тĕрĕс çырма çирĕп хăнăху парасси.

Калинино районĕнчи Кӳлхĕрринчи çичĕ çул вĕренмелли шкулти Николаев юлташ вĕрентекен ачасем чăваш чĕлхине юратса вĕренеççĕ. Вĕсем чăваш чĕлхин пĕлтерĕшĕ, унăн стройĕ, грамматикăлла формисем, словарь пуянлăхĕ çинчен ăнлантарса пама пĕлеççĕ. Вĕсем вуланă статьян е уйрăм пайсен содержанине калама, вуланă произведенин идейине уçса пама, хăйсен шухăшне каласа е çырса пама, грамматика тĕлĕшĕнчен те, логика тĕлĕшĕнчен те тĕрĕс тишкĕрсе тухма пĕлеççĕ.

Николаев учитель хăйĕн пĕлĕвне ӳстерсе пырать. Пĕтĕм ĕçе Сталин юлташ чĕлхе çинчен вĕрентнипе çыхăнтарса пырать.

Уйкас Юнтапари вăтам шкулта та тăван чĕлхене вĕрентес ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Ачасем илемлĕ литературăпа хытă интересленеççĕ. Тăван литературăна ытларах вулама хăнăхтарас тесе, шкул дирекцийĕ кăçал 2.500 тенкĕлĕх чăвашла кĕнекесем туяннă, «Ялав», «Тăван Атăл» журналсем çырăнса илнĕ. Кунта час-часах вулакансен конференцийĕсем пулса иртеççĕ. Библиотека «Çак кĕнекесене вула!» ятлă витрина тунă.

Шкулти вĕрентӳпе воспитани ĕçĕн пахалăхĕ, чи малтан, учительтен килет. Хăйĕн ĕçĕнчи ответлăха туйса ĕçлекен, хăйĕн пĕлĕвне ялан ӳстерсе пыракан учителĕн вĕрентӳпе воспитани ĕçĕ ăнăçлă пулса пырать.

Калининори вăтам шкулта тăван чĕлхене вĕрентекен учительсем хăйсен урокĕсене наукăпа идея тĕлĕшĕнчен çӳлĕ пусăмра ирттереççĕ, методика кăтартăвĕсене тĕрĕс пурнăçласа пыраççĕ. О. Александрова юлташ хăйĕн урокĕсенче нагляднăй пособисемпе усă курать. Грамматикăн тĕрлĕ уйрăмĕсене вĕреннĕ чухне вĕренекенсем калавсемпе очерксенчен кирлĕ тĕслĕхсене тупма пĕлеççĕ. Çакнашкал ĕçлени грамматикăна ним ăнланмасăр вĕренессинчен хăтарать.

Чăваш чĕлхине вĕрентессин тĕп задачисенчен пĕри—вĕренекенсене чăвашла тĕрĕс çырма хăнăхтарасси. V—VII-мĕш классенче орфографипе пунктуацие вĕрентес ĕç чылай пысăк вырăн йышăнмалла. Орфографипе пунктуаци хăнăхтарăвĕсене хутран-ситрен кăна мар, куллен туса пымалла.

Туçи Мăратри çичĕ çул вĕренмелли шкулта ĕçлекен М. Трайкова учительница ку тĕлĕшпе лайăх ĕçлет. Вăл вĕренекенсем тунă заданисене тĕплĕн тĕрĕслет, тĕрĕсленĕ ĕçсем тăрăх уйрăм калаçусем ирттерет, тетрадьсен выставкине йĕркелет тата ытти те.

Чĕлхене грамматика урокĕнче çеç мар, литература урокĕнче те вĕренме кирлĕ. Çакна учителĕн ялан асра тытмалла. Илемлĕ вулавсем ирттерни, литература произведенисене анализ туни вĕрентекенсен сăмах пуянлăхне ӳстерме, литература чĕлхипе калаçма хăнăхтарма пулăшать.

Уйкас Юнтапари вăтам шкулта учительсем ку тĕлĕшпе творчествăллă ĕçлеççĕ. Вĕсем грамматикăн кашни уйрăмĕ тăрăх ачасене хăйсене тĕслĕхсем туптараççĕ, уйрăм предложенисем çыртараççĕ. Ачасем тупса çырнă предложенисене пухса сборниксем кăлараççĕ. Кăçалхи вĕренӳ çулĕн пирвайхи çур çулĕнче «Хутлă предложенисем», «Предложенине сыхăнман уйрăм членсем» тата «Наречи» темăсемпе ачасем тупса çырнă материалсене пухса сборник кăларнă. Ку шкулта вĕренӳ ĕçĕнче литература кружокĕ те пысăк пулăшу парать. Кружок кăçалхи çур çул хушшинче литература теорин кĕске курсне, тăван литературăн историне вĕреннĕ. Кружок алăпа çырса кашни уйăхра «Çамрăк хунав» журнал кăларса тăрать, литература каçĕсем, чи лайăх сочиненисен конкурсĕсем ирттерет. Кунта творчествăллă сочиненисем ытларах тăваççĕ. Вĕсем пуринчен ытла коллективпа мĕн курни çинчен, пурнăçра пулнă ĕç çинчен çыраççĕ. Кăçал, сăмахран, çакăн пек сочиненисем çырнă: «Эпир «Чăн-чăн этем çинчен» кино курни», «Эпир спектакль лартни», «Уйăх тĕттĕмленни», «Эпир мĕнле кĕнекесем вуланă» тата ытти те. VIII-мĕш класра вĕренекенсем К. Турхан çырнă «Пăмраллă ял» романа питĕ юратса вуласа тухнă. Çакăн хыççăн ачасем колхозри пархатарлă ĕçсем çинчен, колхозлă ялăн культурине ӳстерессишĕн кĕрешес ĕç çинчен сочиненисем çырнă.

Тăван чĕлхене вĕрентес ĕçре килте вуланине йĕркелесси пысăк вырăн йышăнса тăрать. Ачасене коммунистла воспитани парса хăюллă патриотсем пулма вĕрентес ĕçе, вĕсене хамăрăн халăха хисеплесе юратма, совет халăхĕн паттăр ĕçĕсемпе савăнма вĕрентес ĕçе илемлĕ литература урокĕсенче анчах мар, килте вулассине йĕркеленипе те туса пымалла.

Сăкăтри çичĕ çул вĕренмелли шкулта (директорĕ М. Филиппов юлташ) библиотекăпа нумай пуянлатнă. Кунта ачасене лайăх кĕнекесем суйласа илме уйрăммăн тата коллективлă калаçусем ирттернипе, ятарласа кĕнекесен списокĕсемпе бюллетеньсем тунипе пулăшаççĕ. Учитель списокра панă кĕнекесене малтан хăй вуласа тухать, кĕнеке пирки «Чăваш Коммуни», «Советская Чувашия» хаçатсенче тата «Ялавпа» «Тăван Атăл» журналсенче тухнă библиографиллĕ статьясемпе усă курать.

Чылай çĕрте ĕç çапла пулса пымасть-ха. Районти нумай шкулсенче тăван чĕлхене ачасем япăх пĕлеççĕ, вĕренӳре чылайăшĕ ĕлкĕрсе пыраймаççĕ.

Тăван чĕлхене вĕрентес ĕçре вырăс чĕлхипе çыхăнтарни питĕ усăллă. Анчах учительсен канашлăвĕсенче те, педагогика совечĕсенче те çак икĕ чĕлхене пĕр-пĕрипе çыхăнтарса вĕрентес пирки учительсем халĕ те [illegible] тăталаймаççĕ.

С. СЕЛЕЗНЕВ.

Калинино районĕ.

Совет делегацийӗ Италирен килме тухнӑ

РИМ, январӗн 16-мӗшӗ. (ТАСС). Совет Союзӗнчи обществӑллӑ организацисен совет халӑхӗ Италири шыв тулнипе инкек курнӑ халӑха панӑ парнесене Италие ӑсатнӑ делегацийӗ Рим хулинче столицӑри Ӗҫ палатин активӗпе тӗл пулнӑ. Унта Пӗтӗм Италири Ӗҫ конфедерацийӗн генеральнӑй секретарӗ ди Витторио, ҫав конфедерацин секретарӗсем Сантипе Битосси тата конфедерацин ытти руководителӗсем пынӑ. Совет Союзӗнчен пынӑ хӑнасене Римри ӗҫҫынниcен ячӗпе Ӗҫ палатин отвeтлӑ секретарӗ Брандани саламланӑ. Тӗл пулса калаҫма пухӑннӑ ҫынсем—профсоюзсен организаторӗсемпе Римри ӗҫҫыннисем Березинпа Лебедева каласа кӑтартнисене интересленсе итленӗ. Совет делегацийӗн членӗсем ССР Союзӗнчи ӗҫҫыннисен пурнӑҫӗпе ӗҫӗ ҫинчен, вӗсен пӗлӳсем туянма тата хӑйсен пурнӑҫне лайӑхлатма тата культурӑллӑ шайне ӳстерсе пыма пысӑк майсем пурри ҫинчен каласа кӑтартнӑ.

Паян совет делегацийӗ ССР Союзне таврӑнма Римран тухнӑ. Вокзалта делегатсене ди Витторио, Мария Магдалена Росси, Берти профессор тата Италири демократиллӗ организацисен ытти представителӗсем ӑсатса янӑ.

Итали общественноҫӗ хӗснипе

РИМ, январӗн 16-мӗшӗ. (ТАСС). «Унита» хаҫат ҫакӑн ҫинчен пӗлтерет: шалти ӗҫсен министрӗ Шельба Италие виҫӗ уйӑхлӑха пынӑ Пабло Неруда поэта унтан кӑларса яма приказ панӑ пулнӑ. Халӗ, общественность хӗснипе, шалти ӗҫсен министрӗн хӑйӗн малтанхи приказне пӑрахӑҫлама тивнӗ, вӑл Пабло Неруда поэта, Италире пурӑнмалли срок тухиччене х, унта юлма ирӗк панӑ.

Данипе Совет Союзӗн туслӑх уйӑхлӑхӗ

КОПЕНГАГЕН, январӗн 16-мӗшӗ. (ТАСС). Данипе Совет Союзӗ обществи январӗн 15-мӗшӗнчен пуҫласа февралӗн 15-мӗшӗччен Данипе Совет Союзӗн туслӑх уйӑхлӑхне ирттерет. Ҫавна май ӗнер Копенгагенра Данипе Совет Союзӗ обществин пухӑвӗ пулнӑ. Пуху залне ССР Союзӗн тата Данин государство ялавӗсемпе тата Данипе Совет Союзӗн туслӑхне, вӗсем пӗр-пӗринпе килӗштерсе ӗҫлесе пурӑнассине ҫирӗплетме чӗнекен лозунгсемпе илемлетнӗ.

Пухӑва пынисем В. П. Никитин академик тата РСФСР Министрӗсен Совечӗ ҫумӗнчи культурӑпа ҫутӗҫ учрежденийӗсен ӗҫӗсен комитечӗн председателӗ Е. И. Леонтьева каланӑ сӑмахсене питӗ тимлӗ итленӗ. Вӗсем совет халӑхӗ мирлӗ ӗҫе ӑнӑҫлӑ пурнӑҫласа пыни ҫинчен тата коммунизӑн сталинла аслӑ стройкисем ҫинчен каласа панӑ. Совет делегацийӗн членӗсем СССР яланах мирлӗ политика тытса пыни, совет халӑхӗ миршӗн кӗрешни, совет ҫыннисем ытти халӑхсемпе, ҫав шутра Дани халӑхӗпе туслӑ тата килӗштерсе пурӑнма тӑрӑшни ҫинчен пӗлтерсен, пухӑва пынисем ҫав сӑмахсене тӑвӑллӑ алӑ ҫупса ырланӑ.

Данири рабочисен делегацийӗн членӗ П. Педерсен хӑй Совет Союзне кайсан мӗн курни ҫинчен каласа кӑтартнӑ.

Унтан Данипе Совет Союзӗ обществин председателӗ Иорген Поргесен профессор сӑмах тухса каланӑ.

Гамбург портӗнчи рабочисем Англин хӗҫпӑшал тиенӗ карапӗсене пушатма килӗшмеҫҫӗ

БЕРЛИН, январӗн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Лейпцигри радио пӗлтернӗ тӑрӑх, Англив Хӗвеланӑҫ Германири оккупаци ҫарӗсем валли хӗҫпӑшалсемпе боеприпассем тиенӗ икӗ карапӗ Гамбург портнӗ пыма тухнӑ. Гамбург портӗнчи рабочисем, пӗр шухӑшлӑ пулса, Англин ҫав карапӗсене пушатмалла мар тесе решени йышӑннӑ.

Голландире ӗҫсӗр тӑрса юлнисен хисепӗ ӳснӗ

ГААГА, январӗн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Голландире ӗҫсӗр тӑрса юлнисен йышӗ хӑвӑрт ӳссе пырать. Кун пирки Голландири пӗрлештернӗ реформистла профсоюзсен хӑшпӗр руководителӗсем те шикленсе ӳкнӗ. «Хет фрейе фолк» хаҫат «Ӗҫсӗр тӑрса юлакансем нумай пуласси хӑратать» ятлӑ статья пичетленӗ. Унта ҫырнинчен ҫакӑ паллӑ пулнӑ: Алмело хулинчи профсоюзсен пухӑвӗнче Голландири пӗрлештернӗ профсоюзсен пӗр руководителӗ—Остерхайс Голланди правительствин пурӑнмалли ҫуртйӗрсем лартас тата ӗҫҫыннисен нушисене тивӗҫтерес ыйтусенчи политикине хытӑ критикӑланӑ. Вӑл хальхи вӑхӑтра Голландире ӗҫсӗр тӑрса юлнисем 150 пин ҫынна яхӑн, февраль уйӑхӗ вӗҫленнӗ тӗле ӗҫсӗр тӑрса юлнисен йышӗ 160—170 пин ҫын патне ҫитеӗ тесе пӗлтернӗ.

ЧИЛИРИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙӖН ПӖР РУКОВОДИТЕЛЬНЕ АРЕСТЛЕНЕ

НЬЮ-ЙОРК, январӗн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Сент-Яго хулинчи (Чили) радио пӗлтернӗ тӑрӑх, Вальпараисӑра Чилири коммунистсен партийӗн пӗр руководительне — Педро Арельяно Аларкона тытса хупнӑ.

ООН Генеральнӑй Ассамблейин улттӑмӗш сессийӗ

Америкӑн агрессиллӗ лагерӗнчи ҫӗршывсем мирлӗ пурнӑҫ тума тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнма килӗшменнине тепӗр хут кӑтартаҫҫӗ

ПАРИЖ, январӗн 15-мӗшӗ. (ТАСС спецкорӗ). СССР делегацийӗ январӗн 12-мӗшӗнче тӑратнӑ сӗнӳсем халӑхсемшӗн мирлӗ пурнӑҫ тата хӑрушсӑрлӑх тумалли пысӑк программа пулса тӑраҫҫӗ. Ку программа пирки Америкӑпа Англи блокӗнчи ҫӗршывсен делегацийӗсем нимӗн шарламасӑр тӑма пултараймаҫ. Халӗ вара вӗсем ҫав сӗнӳсене сӳтсе явас ӗҫрен пӑрӑнма хӑтланаҫҫӗ.

Ҫав делегацисем тахҫанах каласа панӑ сӑмахсенех тепӗр хут калама пӑхаҫҫӗ. Вӗсем тухса каланисем халиччен суйса каланӑ сӑмахсемех. Вӗсем СССР енчен тапӑнас «хӑрушлӑх» пур текен элеклӗ сӑмахсене, США-н тата Атлантика блокӗнчи ытти ҫӗршывсен агрессиллӗ планӗсене пытарса тӑма хӑтланса суйнисене, тахҫанах тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑскерсене, тепӗр хут каланӑ. Политика комитечӗн паян кӑнтӑрла пулнӑ ларӑвӗнче Англи, Голланди, Бельги тата Австрали представителӗсем шӑпах та ҫав сӑмахсене каланӑ.

Британи делегачӗн Ллойдӑн атомлӑ хӗҫпӑшала чарса лартас тата ҫавна пурнӑҫланине тӗрӗслесе тӑма контроль тӑвас пирки Совет Союзӗ панӑ ҫӗнӗ сӗнӳсем, икӗ енӗ хушшинче «кӗпер хывма», вӑл калашле, тимлесех тӑрӑшни пулнине ирӗксӗрех йышӑнма тивнӗ. Ҫавӑн пек калаҫса татӑлса килӗшӳ тума тӑрӑшнине ырлатӑп, тенӗ вӑл. Анчах, ӑс-тӑнлӑ шухӑша хирӗҫ пырса, Ллойд ҫине тӑрсах США, Англи тата Франци сӗнӗвне хӳтӗленӗ, совет делегацийӗн сӗнӗвӗсенчи ҫӳлте асӑннӑ пунктсем тӑрӑх решени йышӑнмалла мар, вӗсене хӗҫпӑшалсӑрланас тӗлӗшпе ӗҫлекен комиссире пӑхса тухма памалла, тенӗ.

Америкӑпа Англи блокӗнчи ҫӗршывсен представителӗсем совет делегацийӗн сӗнӗвӗсенчи иккӗмӗш пункта—Корея ыйтӑвне хӑвӑртрах мирлӗ майпа йӗркелемелле тенине хирӗҫ каланӑ, ҫав пункта йышӑнма килӗшмен. Америкӑпа Англи блокӗнчи ҫӗршывсен представителӗсем ҫапла каланӑ: халӗ ку ыйтупа Генеральнӑй Ассамблейӑра сӑмах хускатни перемири тӑвас пирки Паньмыньчжоньре пыракан калаҫусене чӑрмантарма пултарать, тенӗ. Вӗсем хӑйсем ку пункта йышӑнма килӗшменнине ҫав сӑлтавпа витсе пытантарма хӑтланнӑ. Анчах вӗсем мӗншӗн ҫавӑн пек позици тытса пыни гоминдановец тухса каланинчен курӑннӑ. Вӑл: совет делегацийӗн сӗнӗвне сирсе ямалла, мӗншӗн тесен «пирӗн тӗллев—Корейӑра вӗҫне ҫитиччене х вӑрҫасси», тенӗ. Шӑпах та ҫак сӑлтава пула ӗнтӗ, Америкӑпа Англи блокӗ халӗ Корея ыйтӑвне сӳтсе явма килӗшмест. США Корейӑри вӑрҫа малалла тӑсасшӑн, мӗншӗн тесен, Корейӑра вӑрҫӑ пыни Америка монополийӗсемшӗн усӑллӑ, вӗсем ҫав вӑрҫа пула нумай пуяҫҫӗ. Вӗсем Корейӑран США колонийӗ туса хурасшӑн.

Ҫакна Чехословаки делегацийӗн пуҫлӑхӗ Секанинова хӑйӗн сӑмахӗнче питӗ ӗненмелле тата тӗплӗ кӑтартса панӑ. Вӑл Паньмыньчжоньри калаҫусене ӑнӑҫлӑ вӗҫлеме шӑпах та США чӑрмантарса пынине, перемири ҫинчен килӗшӳ тӑвас ӗҫре США юриех чӑрмавсем кӑларса тӑратнине палӑртнӑ. Хӑй каланине нумай фактсемпе ҫирӗплетнӗ. Совет Союзӗн пур сӗнӗвӗсем ҫинчен те Секанинова тӗплӗ каласа панӑ, пӗр пункт хыҫҫӑн тепӗр пункта илсе, вӗсне мӗншӗн кӑларса тӑратни ҫинчен каланӑ. Ку сӗнӳсене хирӗҫ ООН-ри агрессиллӗ ушкӑнра тӑракан ҫӗршывсен представителӗсем суйса каланисене вӑл тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑ. Ҫапла вара, Секанинова совет делегацийӗ тӗнчери ҫӗршывсем хушшинчи йывӑрлӑха пӗтерме, халӑхсемшӗн мирлӗ пурнӑҫ тата хӑрушсӑрлӑх тума чӑнласах тӑрӑшнипе ҫав сӗнӳсене тӑратнине кӑтартса панӑ.

Египет делегачӗ Фавзи-бей тухса калани не комитет уйрӑмах питӗ тимлӗ итленӗ. Вӑл совет делегацийӗн сӗнӗвӗсенче мирлӗ пурнӑҫ тӑвас тӗлӗшпе нумай ыйтусене хускатни ҫинчен каланӑ. Ку сӗнӳсенче чӑннипех те питӗ пысӑк пӗлтерӗшлӗ ыйтусене кӑларса тӑратнӑ. Фавзи ҫав ыйтусенчен хӑшпӗрисем ҫинче чарӑнса тӑнӑ. Вӑл ҫак кунсенче Египет делегацийӗн пуҫлӑхӗ, Египет ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗ Салах эд-Дин-паша Англи, Франци тата Америка сӗнӗвне—вӗсен Вӑтаҫӗр Хӗвелтухӑҫӗнчи командовани текенскерне тумалли проектне—хытӑ критикӑлани ҫинчен аса илтернӗ. Вӗсем, Ҫывӑх Хӗвелтухӑҫӗнчи халӑхсен ирӗклӗхне хирӗҫ пырса, ҫав командование тата «вӑйсен районӗ» текенскерне туса хума, ҫавсене туни ҫинчен кайран тин Египета тата Ҫывӑх Хӗвелтухӑҫӗнчи ҫӗршывсене пӗлтерме шутланине Египет делегацийӗн пуҫлӑхӗ хытӑ питленӗ.

Ҫапах та Вӑтаҫӗр Хӗвелтухӑҫӗнчи командовани текенскерне тӑвас ӗҫе шухӑшласа кӑларнӑ ҫынсем хӑйсен позицийӗсене пӑрахӑҫламаҫҫӗ. Кун пирки, сӑмахран, Трумэнпа Черчилль тӗлпулӑвӗ ҫинчен пӗлтернӗ коммюникире те каланӑ. Анчах Египет ҫавӑн пек командовани тума нихҫан та килӗшмӗ, тенӗ Фавзи-бей.

Совет делегацийӗн сӗнӗвӗсенче ют ҫӗршывсен территорийӗсенче ҫар базисем тума юрамасть, ун пек базӑсем туни ООН членӗ пулнипе килӗшӳллӗ мар, тесе каланӑ. Кун пирки эпир ҫирӗп позици тытса пыратпӑр, тенӗ Фавзи-бей. Египет, сӑмахран, хӑйӗн территорийӗнче урӑх государствӑсене ҫар базисем тытса тӑма, ҫав базӑсене тума парас ҫук, мӗншӗн тесен пирӗн территорире ют ҫӗршывсем хӑйсен ҫар базисене туни вӑл ООН уставне пӑсни пулать, ҫавӑн пек базӑсем тунӑ пирки Египет халӑхӗ хытӑ тарӑхма пултарать. Египет хӑй килӗшнипе кӑна урӑх государствӑсене хӑйӗн территорийӗнче ҫар базисем тума ирӗк пама пултарать, тенӗ вӑл.

Совет делегацийӗ ют ҫӗршывсен мӗн пур ҫарӗсене Корейӑран илсе каяс пирки панӑ сӗнӳпе хӑй килӗшни ҫинчен Фавзи-бей пӗлтернӗ. Корея ыйтӑвӗ шӑпах та ӗнтӗ унта ют ҫӗршывсен ҫарӗсем пулнӑ пирки тата ют ҫӗршывсем хӗтӗртнипе тухса тӑнӑ. Ытти государствӑсен ӗҫӗсене хутшӑнни нихҫан та ырӑ ӗҫ патне илсе пыман. Ют государствӑсем ытти ҫӗршывсен ӗҫӗсене хутшӑннӑ пирки вӑрҫӑсем пуҫланаҫҫӗ.

Совет сӗнӗвӗсенчи атомлӑ хӗҫпӑшала чарса лартмалли, хӗҫпӑшалсене чакармалли тата контроль тумалли ҫинчен ҫырнӑ пунктсен пӗлтерӗшӗ пысӑк пулнине те Египет делегачӗ палӑртнӑ. Египет делегацийӗ Совет Союзӗ аслӑ державӑсем хушшинче мире сыхламалли килӗшӳ тума сӗннине ырлать, тенӗ юлашкинчен Фавзи-бей.

Лару хупӑнас умӗн Украина ССР делегацийӗн пуҫлӑхӗ А. М. Барановский пысӑк сӑмах тухса каланӑ.

А. М. Барановский сӑмахӗ

Англипе Америкӑн ООН-ри агрессиллӗ ушкӑнӗсен представителӗсем Совет Союзӗн сӗнӗвӗсене тӳрремӗнех сирсе яма хӑяймаҫҫӗ. Вӗсем, хӑйсен шухӑшӗсемпе СССР делегацийӗн шухӑшӗ пӗр-пӗрин патне ҫывхарнине йышӑнса, тактикӑллӑ маневрсем тума тытӑнчӗҫ, вӗсем ҫав сӗнӳсене комитетра сӳтсе явтарасшӑн мар. Вӗсем резолюци хатӗрленӗ, унта: Совет Союзӗн сӗнӗвӗсене хӗҫпӑшалсӑрланас тӗлӗшпе ӗҫлекен комиссие памалла, тенӗ. Анчах ҫавӑн пек тума мӗнле сӑлтав пур-ха? Ллойд господин ку ыйтупа икӗ хутчен тухса каларӗ пулин те, мӗншӗн ҫавӑн пек тума кирли ҫинчен пӗр пысӑк сӑлтав та илсе кӑтартмарӗ.

Ллойд кунта виҫӗ делегаци ҫак ыйтӑва комиссие пама сӗнни вӑл совет резолюцине пачах пӑчлантарса лартмаллине пӗлтермест тесе, кун пирки пире ӗнентерме хӑтланчӗ. Анчах вӑл кун хыҫҫӑн каланинчен Англипе Америка ушкӑнӗ совет делегацийӗн сӗнӗвӗсене пӑхса тухас ӗҫе чарса лартма хӑтланни курӑнать.

Америкӑри, Англири, Францири хаҫатсем Совет Союзӗн сӗнӗвӗсене атомлӑ хӗҫпӑшала чарса лартас ыйтӑва практикӑра татса парас ӗҫре малалла ҫӗнӗ утӑм туни пулать тесе хаклаҫҫӗ. Халлӗхе ҫав сӗнӳсен шухӑшӗ ҫинчен каламасӑрах, пирӗн ҫакна палӑртас пулать: Совет Союзӗн резолюцийӗнче тӗп тата принципиальнӑй ыйтусем ҫинчен каланӑ, ку ыйтусене мӗнле татса памалли ҫинчен кӑтартусем пани кирлӗ, унсӑрӑн ҫав резолюцие нимӗнле комиссие те пама юрамасть. Ку резолюцие мӗнле пӑхса тухмалли ҫинчен кӑтарту памасан, ку сӗнӳсем тӗлӗшпе кирек мӗнле комисси ӗҫленинчен те нимӗнле усӑ та пулас ҫук.

Атомлӑ хӗҫпӑшала чарса лартасси ҫинчен ҫак сессире сӳтсе явнӑ чухне хӗвеланӑҫӗнчи виҫӗ держава представителӗсем ҫакӑн пек условисем кӑларса тӑратрӗҫ: Совет Союзӗ тӗнчери ҫӗршывсен атомлӑ хӗҫпӑшала чарса лартнине пурнӑҫланине тӗрӗслесе тӑракан органне тӑвиччене х тата вӑл ӗҫлеме тытӑниччене х атомлӑ хӗҫпӑшала чарса лартмалли требованине килӗштӗр, ун чухне вара атомлӑ хӗҫпӑшала чарса лартас пирки калаҫса татӑлма пулать, терӗҫ. «Атом энергине контроллесе тӑмалли ҫул-йӗрсем ҫинчен, ҫав вӑхӑтрах атомлӑ хӗҫпӑшала чарса лартма кирлине асра тытмалли ҫинчен» пӑхса тухма май пурри ҫинчен Ллойд Политика комитечӗн 1951 ҫулхи декабрӗн 11-мӗшӗнчи ларӑвӗнче каланӑччӗ. Перу представителӗ Белаунде хӑйӗн сӑмахӗнче атомлӑ хӗҫпӑшала чарса лартас ӗҫе контроль органӗ тӑвас ӗҫпе ҫыхӑнтарни ку ыйтури хирӗҫӳсене сирсе яма шанчӑклӑ май парать тенӗччӗ.

Ҫапла вара, виҫӗ держава представителӗсем тата вӗсем майлӑ тӑракан чылай делегацисем тӳрремӗнех ҫакна палӑртнӑччӗ: Совет Союзӗн сӗнӗвӗсенче малтан Ассамблея атомлӑ хӗҫпӑшала чарса лартмалла тата ҫавна пурнӑҫланине тӗрӗслесе тӑма контроль тумалли ҫинчен, унтан кайран вара конвенци хатӗрлесе алӑ пуснӑ тата тӗрӗслев аппарачӗ тунӑ хыҫҫӑн контроль ӗҫлеме тытӑнмалли ҫинчен каланӑ, ҫак ӗҫсем пӗр-пӗринчен уйӑрӑлса тӑнине пӗтерни ку ыйтури хирӗҫӳсене сирсе яма май парать, тенӗччӗ.

Ку ыйтури хирӗҫӳсене пӗтерме тӑрӑшса, Совет Союзӗн делегацийӗ хӑйӗн малтанхи сӗнӗвӗсене улӑштарчӗ. Улӑштарнӑ сӗнӳсенче Генеральнӑй Ассамблея халех, хальхи сессирех, атомлӑ хӗҫпӑшала чарса лартни ҫинчен тата ҫавна пурнӑҫланине тӗрӗслеме тӗнчери ҫӗршывсен ҫирӗп контрольне туни ҫинчен пӗлтермелле, тенӗ. Ҫав вӑхӑтрах СССР делегацийӗ ҫапла тума палӑртать: атомлӑ хӗҫпӑшала чарса лартмалла туни вара государствӑсем атомлӑ хӗҫпӑшала чарса лартни ҫинчен сырнӑ конвенцие алӑ пуснӑ тата тӗнчери ҫӗршывсен контроль механизмӗ ӗҫлеме тытӑнсан вӑй илмелле, тет.

Генеральнӑй Ассамблея атомлӑ хӗҫпӑшала чарса лартма йышӑнни вӑл атомлӑ бомбӑсем тума халех чарӑнмаллине пӗлтермест пулин те, анчах 60 ҫӗршыв делегацийӗсем ҫавӑн пек решени йышӑнни мирла тӗлӗшпе пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулӗччӗ. Генеральнӑй Ассамблея ҫавӑн пек решени йышӑнни атомлӑ хӗҫпӑшалпа усӑ курма чаракан пысӑк ӗҫ пулӗччӗ.

Унтан Барановский тӗрӗслев инспекцийӗ мӗнле пулмалли ҫинчен каланӑ.

Совет Союзӗ хӑйӗн сӗнӗвӗсене Генеральнӑй Ассамблейӑра пӑхса тухма маларах та тӑратнӑччӗ тесе, ҫак сӑлтавпа хӑшпӗр делегацисем совет сӗнӗвӗсене сирсе яма пӑхнине, вӗсем ҫавӑн пек хӑтланнипе тӗрӗс туманнине Барановский палӑртнӑ.

Чӑнах та, Совет Союзӗ хӑйӗн сӗнӗвӗсене маларах та тӑратнӑччӗ, тенӗ Барановский. Анчах ССР Союзӗ хӑйӗн сӗнӗвӗсене темиҫе ҫул хушши ҫине тӑрса хӳтӗлени вӗсен пӗлтерӗшне пӗчӗклетме пултарать-и вара? Пачах урӑхла. Ҫакӑ вӑл мире тӗреклетес тӗлӗшпе пӗр тӑхтаса тӑмасӑр татса памалли ыйтусене пӑхса тухас ӗҫе ООН-ри агрессиллӗ ушкӑн чарса лартнине кӑтартса парать. ССР Союзӗ атомлӑ хӗҫпӑшала чарса лартасси тата ҫавна пурнӑҫланине тӗрӗслесе тӑма контроль тӑвасси ҫинчен, Корейӑри вӑрҫа чарса лартасси ҫинчен, пилӗк аслӑ державӑн хӗҫпӑшалӗсемпе хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсене ҫуталӑк хушшинче виҫҫӗмӗш пайӗ чухлӗ чакарасси ҫинчен, пилӗк аслӑ держава хушшинче мире сыхламалли килӗшӳ тӑвасси ҫинчен тепӗр хут сӗнӳсем пачӗ пулсан, тата совет резолюцине кӗртнӗ ытти сӗнӳсене те тӑратрӗ пулсан, ҫакна ҫине тӑрсах тума кирлӗ пулчӗ. Мӗншӗн тесен, хальхи вӑхӑтра васкасах хӗҫпӑшал хатӗрлесси вӑйланса пырать, Атлантика блокӗнчи ҫӗршывсем ССР Союзӗпе халӑх демократи ҫӗршывӗсем ҫине тапӑнма ҫарсем хатӗрлеҫҫӗ, США правительстви, тӗнчери ҫӗршывсем пӗр-пӗрин хушшинче тунӑ килӗшӳсене пӑсса, Япони милитаризмӗпе нимӗҫсен милитаризмне сӗнӗрен ҫӗклентерсе вӑйлатать, вуншар ҫӗршывсенчен хӑйсен ҫарӗсен малти посчӗсем тата ҫӗнӗ вӑрҫӑ валли салтаксем тӑратакан вырӑнсем туса хума тӑрӑшать. Ҫавӑнпа та Совет Союзӗ хӑйӗн сӗнӗвӗсене Генеральнӑй Ассамблейӑра пӑхса тухма тепӗр хут тӑратрӗ.

СССР делегацийӗ тӗнчери ҫӗнӗ вӑрҫӑ хӑрушлӑхне хирӗҫ тата халӑхсем хушшинчи мирпе туслӑха тӗреклетес тӗлӗшпе тумалли ӗҫсем ҫинчен панӑ сӗнӳсене Украина ССР делегацийӗ халех пӑхса тухмалли пысӑк пӗлтерӗшлӗ сӗнӳсем тесе шутлать. Ҫавӑнпа та Украина ССР делегацийӗ ҫав сӗнӳсене хӳтӗлет, вӗсене Генеральнӑй Ассамблейӑн йышӑнмалла, тесе шутлать. Ҫавӑнпа пӗрлех Украина ССР делегацийӗ СССР сӗнӗвӗсене хӗҫпӑшалсӑрланас тӗлӗшпе ӗҫлекен комиссие парассине хирӗҫ тӑрать, совет сӗнӗвӗсене принцип енӗпе мӗнле пӑхса тухмалли ҫинчен комиссие кӑтарту памасӑр, вӗсене унта памалла мар, тенӗ юлашкинчен Барановский.

СССР делегацийӗн мирлӗ пурнӑҫ тумалли программине йышӑнма чарас шутпа Америка лагерӗнчи ҫӗршывсен делегацийӗсем суя сӑлтавсем кӑларса тӑратаҫҫӗ

ПАРИЖ, январӗн 16-мӗшӗ. (ТАСС спецкорӗ). Паян Политика комитечӗн ларӑвӗнче СССР делегацийӗн «Тӗнчери ҫӗнӗ вӑрҫӑ хӑрушлӑхне хирӗҫ тата халӑхсем хушшинчи мирпе туслӑха тӗреклетес тӗлӗшпе тумалли ӗҫсем ҫинчен» тесе ят панӑ резолюцийӗн проектне малалла сӳтсе явнӑ.

Америкӑн агрессиллӗ лагерӗнчи ҫӗршывсем атомлӑ хӗҫпӑшала чарса лартасшӑн мар, хӗҫпӑшалсене чакарасшӑн мар, ҫав ӗҫсене пурнӑҫланине тӗрӗслесе тӑма тӗнчери контроль тӑвасшӑн мар. Ҫакӑ вара Турци, Канада тата Филиппин делегачӗсем тухса каланинчен тепӗр хут, уҫҫӑнах курӑннӑ. Вӗсем совет делегацийӗн сӗнӗвӗсене хӗҫпӑшалсӑрланас тӗлӗшпе ӗҫлекен комиссие парасшӑн, ҫапла майпа ку сӗнӳсене пӑчлантарса лартасшӑн. Ҫав шутпа вӗсем кашни тухса каламассеренех тӗрлӗ суя сӑлтавсем нумай кӑларса тӑраҫҫӗ, ҫӗнӗ те ҫӗнӗ сӑлтавсем туртса кӑлараҫҫӗ.

СССР делегацийӗ питӗ лайӑх ӑнланмалла тата усӑллӑ сӗнӳсем тӑратнӑ. Ҫапах та Канада делегачӗ ку сӗнӳсем пирки СССР делегацине ыйтусем чылай панӑ. Вӑл ҫапла майпа ку сӗнӳсен шухӑшне пӑтраштарма, вӗсене тӳрӗ кӑмӑлпа тӑратнӑ пирки иккӗлентерекен шухӑш сарма хӑтланнӑ. Вӑл, сӑмахран, ҫапла ыйтнӑ: совет делегацийӗн сӗнӗвӗсемпе килӗшӳллӗн тӗнчери ҫӗршывсен контроль органӗн инспекторӗсем хӑйсем ӑҫта кайма шутланӑ ҫӗре тата хӑйсем хӑҫан кайма шутланӑ вӑхӑтра кайса ҫӳреме пултараҫҫӗ-и? тенӗ. Анчах, пурте пӗлеҫҫӗ ӗнтӗ, Британи делегачӗ Ллойд унччен маларах хӗвеланӑҫӗнчи державӑсем ҫавӑн пек требовани лартмаҫҫӗ, тесе пӗлтернӗччӗ.

Филиппин представителӗ США умӗнче ырӑ пулма тӑрӑшса, лакей пекех хӑтланса, хӑйӗн хуҫисенчен маларах кайнӑ. Вӑл: совет делегацийӗ хӑйӗн сӗнӗвӗсен малтанхи проектне нимӗнле пысӑк улшӑну та кӗртмен, тенӗ. Ҫав вӑхӑтрах, пурте пӗлеҫҫӗ ӗнтӗ, США, Англи тата Франци представителӗсем те, хӑйсем сӑмах тухса каланӑ чухне, совет делегацийӗ хӑйӗн сӗнӗвӗсене кӗртнӗ улшӑнусем атомлӑ хӗҫпӑшала чарса лартас, хӗҫпӑшалсене чакарас тата тӗнчери контроль тӑвас ыйтусемпе пӗр-пӗринпе калаҫса татӑлнӑ тӑрӑх килӗшӳ тӑвас ҫулпа пырса малалла пысӑк утӑм туни пулнине ирӗксӗрех йышӑннӑччӗ.

Филиппин делегачӗ уйрӑмах ют территорисенче ҫар базисем туни ООН членӗ пулнипе килӗшӳллӗ мар текен сӗнӗве хирӗҫ хытӑ каланӑ. Филиппин делегачӗ кун пирки питӗ тарӑхса каланине ӑнланса илме йывӑр мар, мӗншӗн тесен американецсем Филиппин территорийӗнче хӑйсен ҫар базисене тунине вӑл хӑех йышӑннӑ. Филиппин правительстви хӑйӗн ҫӗршывӗн интересӗсене сутнӑ, хӑйӗн халӑхне хирӗҫ ҫапӑҫма, ҫавна «коммунизма хирӗҫ кӗрешетпӗр» тесе туса пыма, пӗтӗм вӑя парса тӑрӑшать, ҫав вӑрҫа валли укҫа нумай расходлать.

Совет делегацийӗ мирлӗ пурнӑҫ тума тӑрӑшса тата тӗплӗ ҫырса хатӗрлесе тӑратнӑ сӗнӳсем Америкӑпа Англи блокӗнчи хӑшпӗр делегацисене те шухӑша янӑ. Ҫапла, Эквадор делегачӗ США совет сӗнӗвӗсене хирӗҫ кӑларса тӑратнӑ сӑлтавсене хӳтӗлеме килӗшмен. Ку сӗнӳсене сасӑланӑ чухне, эпӗ нумай пунктсем тӑрӑх нихӑш майлӑ та сасӑламастӑп, тесе пӗлтернӗ вӑл.

Польша делегачӗ Вербловский пысӑк сӑмах тухса каланӑ. Вӑл совет делегацийӗ тӑратнӑ резолюци проекчӗ ҫинчен тӗплӗн каласа панӑ, ҫав проектри пур сӗнӳсене те тӗнчери ҫӗршывсем хушшинчи йывӑрлӑха, тӗнчери халӑхсене шиклентерекен йывӑрлӑха, сирсе ярассишӗн чунтан-чӗререн тӑрӑшса кӑларса тӑратнине палӑртнӑ.

Совет Союзӗн резолюци проектне, тенӗ Вербловский, мирлӗ пурнӑҫшӑн тӑрӑшас ӗҫри чи пысӑк ыйтусене кӗртнӗ. Унта атомлӑ хӗҫпӑшала чарса лартассипе хӗҫпӑшалсене чакарассинчен пуҫласа пилӗк держава хушшинче мире сыхламалли килӗшӳ тӑвасси патне ҫитиччен каланӑ. Унта Атлантика пактне тата ют ҫӗршывсен территорийӗсенче ҫар базисем тунине сивлениччен пуҫласа тӗнчери ҫӗршывсен контрольне тӑвасси тата хӗҫпӑшалсӑрланас ыйтупа пӗтӗм тӗнчери конференцие пухасси таранах каланӑ. Ҫаксем пурте пӗр-пӗринпе тачӑ ҫыхӑннӑ, вӗсем пӗтӗмӗшпе пӗрлехе, пайланман сӗнӳ пулса тӑраҫҫӗ. Ку проектран уйрӑм пайсене кӑларни ӑна пӑсма пултарать. Ҫавӑнпа ку проектран пӗр сӗнӗве те кӑларма юрамасть. СССР делегацийӗ тӑратнӑ резолюци вӑл халӑхсем пӗр-пӗринпе мирлӗ килӗштерсе пурӑнмалли пурнӑҫ тумалли пысӑк программа пулса тӑрать. Ҫавӑнпа та Польша делегацийӗ ӑна пӗтӗмӗшпех ырлать, тенӗ вӑл.

ПАРИЖ, январӗн 16-мӗшӗ. (ТАСС спецкорӗ). Политика комитечӗн кӑнтӑрлахи ларӑвӗнче совет делегацийӗ «Тӗнчери ҫӗнӗ вӑрҫӑ хӑрушлӑхне хирӗҫ тата халӑхсем хушшинчи мирпе туслӑха тӗреклетес тӗлӗшпе тумалли ӗҫсем ҫинчен» панӑ сӗнӗве малалла сӳтсе явнӑ. Пренире Ҫӗнӗ Зеланди, Югослави, США, Боливи тата Уругвай делегачӗсем сӑмах тухса каланӑ.

Вӗсем пурте Атлантика блокӗнчи ҫӗршывсен представителӗсем кӑларса тӑратнӑ тӗрӗс мар сӑлтавсене тепӗр хут каланӑ. Атлантика блокӗнчи ҫӗршывсен представителӗсем совет делегацийӗн резолюци проектне—вӑрҫӑ пуҫланассине сирсе ярас тата халӑхсем хушшинчи туслӑха тӗреклетес тӗлӗшпе тумалли ӗҫсен конкретнӑй программине—йышӑнма килӗшмеҫҫӗ, ӑна йышӑнассине хирӗҫ вӗсем тӗрлӗ сӑлтавсем кӑларса тӑратаҫҫӗ.

Ларура юлашкинчен Инди делегачӗ тухса каланӑ. Вӑл Генеральнӑй Ассамблея тӗнчери лару-тӑрури йывӑрлӑхсене сирсе ярас тӗлӗшпе тивӗҫлӗ тата усӑллӑ мерӑсем йышӑнассине пӗтӗм тӗнче кӗтни ҫинчен каланӑ. Ку тӗлӗшпе эпир хальхи сессире хӑшпӗр ӗҫсене кӑна тума пултартӑмӑр, тенӗ вӑл. Совет Союзӗ хӑйӗн сӗнӗвӗсене тӑратрӗ. Ку сӗнӳсенче атомлӑ хӗҫпӑшала чарса лартма тата тӗнчери контроль тума, ҫавсене пурнӑҫласа пыма пӗр вӑхӑтрах тытӑннӑ, яланлӑха тунӑ йӗркс тӑрӑх тӗрӗслев ӗҫӗсене пурнӑҫласа пыракан инспекци тума палӑртнӑ. Совет делегацийӗ ку сӗнӳсене тӑратсан, эпир вӗсем мирлӗ пурнӑҫ тума шанчӑк панине курмӑмӑр. Ку вара шӑпах та пирӗнтен нумайӑшӗ хытӑ кӗтни пулчӗ.

Инди делегачӗ ҫапла каланӑ: пирӗн делегаци яланах аслӑ державӑсем пӗр-пӗрин хушшинче килӗшӳ тунӑ тӑрӑх кӑна мирлӗ пурнӑҫ тума май килет тесе шутланӑ. СССР делегацийӗ тӑратнӑ сӗнӳсем пӗр-пӗринпе калаҫса татӑлма, килӗшӳ тумалли никӗсе аслӑлатма май параҫҫӗ. СССР делегацийӗ тӑратнӑ резолюци проектне сасӑланӑ чухне те, Америка делегацийӗ Совет Союзӗн резолюци проектне, Генеральнӑй Ассамблейӑра ун пирки нимӗнле решени те йышӑнмасӑрах, хӗҫпӑшалсӑрланас тӗлӗшпе ӗҫлекен комиссие пама сӗннине сасӑланӑ чухне те, Инди делегацийӗ нихӑш майлӑ та сасӑламӗ, тенӗ вӑл. Ҫапла вара, США совет сӗнӗвӗсене пӑчлантарса лартма хӑтланнипе Инди делегацийӗ килӗшмест, Америка сӗнӗвӗшӗн сасӑламасть.

Ҫакӑнпа лару хупӑннӑ. Председатель ку ыйтупа юлашкинчен, ыран кӑнтӑрла пулмалли ларура, СССР представителӗ тухса каласси ҫинчен пӗлтернӗ.

Республикӑри шахмат чемпионачӗ вӗҫленчӗ

Республика чемпионӗ — В. Сергиевский.

Республикӑри 17-мӗш шахмат чемпионачӗ вӗҫленчӗ. Чемпионатра пултаруллӑ ҫамрӑк шахматистсем пысӑк ҫитӗнӳсем турӗҫ.

Пӗррӗмӗш вырӑна Шупашкарти арҫын ачасен 4-мӗш вӑтам шкулӗнче 9-мӗш класра вӗренекен 15 ҫулхи Владимир Сергиевский тухрӗ. Вӑл шахмат енӗпе республика чемпионӗ ятне илме тивӗҫлӗ пулчӗ. Сергиевский 13 очкоран 11,5 очко выляса илчӗ, пӗр парти те выляса ямарӗ.

Иккӗмӗш вырӑна Шупашкар хула чемпионӗ М. Чугунов тухрӗ. Вӑл 10 очко пухрӗ.

Виҫҫӗмӗш вырӑна 9,5 очко пухса Ю. Смирнов (Шупашкар), тӑваттӑмӗш вырӑна Патӑрьелӗнчи вӑтам шкулта 10-мӗш класра вӗренекен Г. Егоров тухрӗ. Унӑн—8,5 очко.

Сиротинпа Никитин—8-шар очко, Здорнийпа Федоров—6,5-шер очко, Соболев—5,5 очко, Элле—5 очко, Аляутдинов—4,5 очко, Илларионовпа Персов — 3,5-шер очко, Зилгалов—0,5 очко илнӗ.

Республика чемпионне В. Сергиевские хаклӑ парне тата пӗррӗмӗш степеньлӗ диплом панӑ.

Колхозниксен республикӑри 4-мӗш шахмат чемпионачӗ

КӲКЕҪ. Чкалов ячӗпе тӑракан колхозра республикӑри колхозниксен 4-мӗш шахмат чемпионачӗ пырать. Унта 12 шахматист ӑмӑртса выляҫҫӗ.

Пӗррӗмӗш вӑйӑра П. Иванов (Муркаш районӗ)—Емельянова (Шӑмӑршӑ районӗ), А. Васильев—Т. Свинцова (Шупашкар районӗ) ҫӗнтерчӗҫ.

Уйрӑмах В. Романовпа (Ҫӗрпӳ районӗ) Е. Васильев (Калинино районӗ) хушшинчи кӗрешӳ вӑйлӑ пулчӗ. Вӑйӑ Романов ҫӗнтернипе вӗҫленчӗ.

Иккӗмӗшпе виҫҫӗмӗш вӑййӑсенче А. Сергеев, В. Романов, Г. Константинов, П. Антонов (Шупашкар районӗ) шахматистсем лайӑх вылянине палӑртмалла.

Тӑваттӑмӗш вӑййӑра Романов—Сергеевран, Н. Старухин (Шупашкар районӗ)—Е. Васильевран, Грачев (Вӑрнар районӗ)—Свинцовран выляса илчӗҫ. Ивановпа Антонов хушшинчи вӑййӑ никам ҫӗнтерейменнипе вӗҫленчӗ.

Пиллӗкмӗш вӑййӑра Иванов—Свинцова, Романов—Антонова, Сергеев—А. Васильева, С. Васильев—Старухина, Емельянов—Васильева ҫӗнтерчӗҫ.

Ултӑ вӑййӑ хыҫҫӑн Романов малта пырать. Унӑн—5,5 очко. С. Васильев, Иванов, Емельянов, Дерягин 4-шар очко, Старухин—3 очко, Антонов 2,5 очко пухнӑ.

Кӗскен

СОВЕТСКИ. Районти ҫыхӑну кантурӗнче ӗҫлекенсем хӑйсен пӗлӗвне ӳстерессишӗн куллен тӑрӑшаҫҫӗ. Чылайӑшӗ политшкулта вӗренеҫҫӗ, техникӑллӑ вӗренӗве ҫӳреҫҫӗ.

Политинформаци те тӑтӑшах пулать. Кашни работник 2—3 экземпляр хаҫатжурнал ҫыранса илет.

ЧКАЛОВСКИ. Анат Тусари ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулта шахмат турнирӗ ирттерчӗҫ. Унта 12 ача хутшӑнчӗ. 7-мӗш класра вӗренекен Г. Пыркин мала тухрӗ.

ШУПАШКАР. Ҫак кунсенче Шупашкарти йӗлтӗрҫӗсем Ленин ячӗпе тӑракан колхозра пулчӗҫ. Вӗсем ялти спортсменсене йӗлтӗрпе ярӑнмалли техникӑпа паллаштарчӗҫ, ӑмӑрту ирттерчӗҫ.

Хӑнасем физкультурӑпа спорт пӗлтерӗшӗ ҫинчен, паллӑ спортсменсем ҫинчен лекцисем вуласа пачӗҫ.

КАЛИНИНО. «Красный Октябрь» колхоз организацийӗ хуҫалӑх тӗлӗшӗнчен тӗреклене пырать. Иртнӗ ҫулта колхозниксем вӑтам шутпа кашни гектартан 125-шер пӑт ыраш пухса кӗртрӗҫ. Обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана та ирттерсе тултарнӑ. Ҫавӑншӑн государство колхоза сӑмал автомашина парса премиленӗ.

Иртнӗ ҫулта колхозра овощехранилище, кормокухня, локомобиль ҫурчӗ, 1.000 пуҫ чӑх-чӗп вырнаҫмалӑх вите туса лартнӑ.

Ответлӑ редактор заместителӗ
И. П. ПАВЛОВ-ПИНЕР.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского. 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлӑ редактор—0-67, ответлӑ редактор заместителӗ—3-99, ответлӑ секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайӗ—5-74, информаци пайӗ—5-74, парти пурнӑҫ пайӗ—4-17, ялхуҫалӑх пайӗ—3-97, пропаганда пайӗ—8-61, культура пайӗ—8-61, совет строительстви пайӗ—8-61, ҫырусен пайӗ—7-32, издательство кантурӗ—0-23.

НТ 00316 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.